1938
ИЙУЛĔН
20
ЙУНКУН
165 (4978) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ

Пĕр №-ре 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ:
Город Чебоксары,
ул. Вокорарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйĕн 6—23

Ĕçйалкорсене йертсе пымала

Сойузлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлавĕ ĕççыннисен политикăлă тата производствăлă активлăхне вихăçанхинчен çÿле хăпартрĕ. Государствă тытăмĕнче ĕçлеме Ленин—Сталин парти ĕçне пурнăça кĕртессишĕн чĕререн йуратса кĕрешекен, социалисăмла тăван çĕршывăн тĕрекĕпе хăвачĕшĕн, ĕççыннисен пурнăçне пуйан та куљтурăлă, телейлĕ те савăнăçлă тата илемлĕ тăвасшăн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлекен партири тата партире тăман большевиксем çĕршерĕн, пиншерĕн хутшăнчĕç. Çĕнĕ актив ÿсрĕ. Халăхсен иксĕлми туслăхĕ çирĕпленчĕ. Ĕççыннисем Ленин—Сталин партийĕ тавра, аслă çулпуç Сталин йулташ тавра тата та ытларах çирĕппĕн пĕтĕçрĕç.

Парти, совет, профсойуз тата ытти общĕствăлă организацисем суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче организацилĕ, политикăлă-массăлă ĕçре, агитаци тата пропагандă ĕçĕсенче пысăк та пуйан опытсем туйанчĕç. Хайне тивĕç политикăлă ĕçĕн пуйан опычĕсене пичет те туйанчĕ. Пирĕн большевикла пичет хăй тавра Ленин—Сталин парти ĕçне пурнăça кĕртессишĕн пĕтĕм вăйхăватпа ĕçлекен çĕнĕ актива пĕтĕçтерчĕ, ĕçйалкорсен ретне стахановĕцсем, ударниксем, орденоносĕцсем, агитаторсем, доверенăйсем, суйлав комиççийĕсенче ĕçленĕ партири тата партире тăман большевиксем хутшăнчĕç. Вĕсем — большевикла пичетĕн чи хаклă пуйанлăхĕпе вăйĕ, вĕсене пичет ĕçне активлăн хутшăнтармала.

Чăваш республикинче тухса тăракан хаçатсем тавра 10 пин ытла ĕçйалкорсем пĕрлешсе тăраççĕ. Ку—пысăк çар. Ĕçйалкорсен йухăмĕ коммунисен партийĕ йертсе пынипе пĕрмайах пысăккăн аталанса малала пырать, вĕсен активлăхĕ хăпарать, çирĕпленет.

Сталинла Конституци саманинчи ĕçйалкорсен ответлăхĕ тата ытларах ÿсет. Ĕçйалкорсем Ленин — Сталин партийĕн, совет влаçĕн активлă помошникĕсем, „пролетарилĕ общĕствă шухăшĕн командирĕсем" пулса тăраççĕ. „Ку çынсем туйăмлă, чăнлăх хĕлхемĕпе çунакан, çитменлĕхсене туртса кăларма тăрăшакан,—хăш чухне пытака ытларах та авса хураççĕ,—пирĕн çитменлĕхсене палăртас, пирĕн партипе совет правителствин вырăнти ĕçĕсене тÿрлетес тĕлĕшпе тĕп рычагсенчен пĕри пулмала", тенĕ Сталин йулташ.

Халăх тăшманĕсем — троцкиссем, бухаринцăсем тата буржуалă националиссем коммунисен парти ĕçĕшĕн чĕререн ĕçлекен ĕçйалкорсене большевикла пичетрен уйăрма пăхнă.

Ĕçйалкорсен йухăмне вăйлатас çĕрте халăх тăшманĕсен сăтăрла ĕçĕсене пĕтерес тĕлĕшпе парти организацисемпе хаçат редакцийĕсем нумай ĕçсем турĕç. Апла пулин те ĕçйалкорсем хушшинче ĕç лесси кирлĕ вырăнта мар-ха. Корреспондентсен вĕренĕвне йеркелессине, вĕсен квалификацине ÿстерес ĕçе хаçат редакцийĕсем тивĕçлипе хаклаççĕ. 589 ĕçйалкор „Крестьянская газета" хаçат çумĕнчи заочнă вĕренĕве хутшăннă, вĕсемпе районри хаçат редакцийĕсем вăхăтра консуљтацисем, семинарсем туса ирттермеççĕ, заданисене вĕреме пулăшмаççĕ.

Ĕçйалкорсене коммунисла воспитани парасси, вĕсене Маркс — Енгĕлс—Ленин—Сталин вĕрентĕвĕпе хĕçпăшаллантарасси — парти организацисен тата хаçат редакцийĕсен пысăк задачĕсенчен пĕри пулса тăрать. Ĕçйалкорсемпе курссем, çеминарсем, канашлусем ирттермеле, партипе правителствă йышăннă постановленисене ĕçйалкорсене вăхăтра ăнлантарса памала, корреспондентсене вĕсен ĕç квалификацине хăпартма пулăшмала.

Парти организацисен ĕçйалкорсемпе çтена хаçачĕсене ĕçлеме, вĕренме пур майсене те туса памала, вĕсене хĕсĕрлесрен хÿтĕлемеле, ĕçйалкорсен йухăмĕ мĕне пĕлтерни çинчен рабочисемпе колхозниксене тата пĕтĕм ĕççыннисене ăнлантарса памала, ĕçйалкорсен заметкисем тăрăх тăрă шыв çине кăларнă çитменлĕхсене вăхăтра тÿрлетмеле.

Парти райкомĕсен, парти пуçламĕш организацисен районри тата çтена хаçат редакторĕсем ĕçйалкорсемпе мĕнле ĕçлесе пыни çинчен час-часах отчотсем итлемеле, редакцисен çитменлĕхĕсене кăлартса парса, ĕçе вăйлатма пур майсене те туса пымала.

Ĕçйалкорсем партипе правителствă умĕнче тăракан задачăсене лайăх пĕлсе тăччăр. Халĕ сталинла вăйлă тырпула пухса кĕрес ĕçе пуçăнтăмăр. Тырпула кĕске вăхăтра тата пĕр тăкаксăр пухса кĕмеле, государствă умĕнчи парăмсене вăхăтра парса татмала. Тырпула кĕске вăхăтра тата пĕр тăкаксăр пухса кĕрес ĕçре йалхуçалăх машинĕсемпе туллин усă курни тата стахановла йухăма анлăн ÿстерсе пыни татса парать. Çакăнта ĕнтĕ ĕçйалкорсем хĕрÿллĕн ĕçлемеле. Ĕçре палăртнă геройсемпе геройњăсен, стахановецсемпе ударниксен ĕçĕсен паха опычĕсене пĕтĕм колхозниксемшĕн тивĕç тăвассишĕн ĕçе çийелтен тăвакансене тăрă шыв çине кăларассишĕн, ĕç дисциплинине çирĕплетессишĕн, тырпула сыхласа упрассишĕн кĕрешмеле ĕçйалкорсен нумай пинлĕ масси.

Предприйатисенче, колхозсенче, куљтурă, коммуналлă строителствă ĕçĕсенче халăх тăшманĕсен сăтăрла ĕçĕсен йулашкийĕсене пĕтермен-ха. Паллах, ĕçйалкорсен задачи вăл—республикăри хапрăксавăтсем, çĕнĕ строителствăсем хăйсен планĕсене вăхăтра пурнăçлассишăн кĕрешнине тата стахановла йухăм ÿсе пынине кунсерен çырса çутатса пынипе пĕрлех, халăх тăшманĕсен сăтăрла ĕçĕсен йулашкийĕсене кĕске вăхăтра пĕтерме, чейеле пытанса йулнă халăх тăшманĕсене тăрă шыв çине кăларса çапса аркатма партипе совет органĕсене пулăшасси пулса тăрать. Револљуцилĕ сыхăлăх—ĕçйалкорăн чи хаклă та паха йенĕ.

Ĕçйалкорсенчен нумайĕшĕ йаланах вырăнти çитменлĕхсем çинчен час-часах çырса, пулса иртекен пысăк çитĕвÿçемпе çĕнтерÿсем çинчен çырассине манăçа хăвараççĕ. Ку ĕнтĕ хăшпĕр ĕçйалкорсем пурнăçра пулса иртекен ĕçсен тулашĕнче тăнине кăтартать. Ĕçйалкорăн задачи—вырăнти çитменлĕхсене тăрă шыв çине кăларса, вĕсене пĕтерессишĕн кĕрешнипе пĕрлех, колхозри, савăтри, шкулти, фермăри, çĕнĕ строителствăсенчи, чукунçул çинчи, пур çĕрте те пулса иртекен пысăк çитĕнÿсене, çав çитĕнÿсенче паларнă çынсен ĕçĕсене тĕплĕн, тарăнăн сăнласа парасси пулать. Ĕçйалкор вăл—стахановĕц, ударник, унăн пур ĕçре те малти ретре пымала.

Пирĕн республикăри хаçат редакцийĕсем кашни кунах темиçе çĕршер çырусем илеççĕ. Вăл çырусене ĕççыннисем, ĕçйалкорсем çыраççĕ. Çав çырусем тăрăх пайан республикăра мĕн пулса иртнине, ăçта мĕнле çитменлĕхсем пуррине пурне те курма пулать. Çавăнпа та ĕçйалкорăн çырăвĕсем çиве тимлĕн, чĕререн йуратса пăхни—хаçат работникĕсен пысăк та чыслă ĕçе.

Парти райкомĕсем, пуçламĕш организацисем тата районри хаçат редакцийĕсем ĕçйалкорсем хушшинче ĕçлессине пысăк тивĕçе хумала. Ĕçйалкорсен нумай пинлĕ çарне пысăккăн аталантарса, куллен йертсе пымала, социалисăм строителствинче татах та пысăк çитĕнÿсемшĕн кĕрешес ĕçе йавăçтармала.

РСФС Республикĕн пĕрремĕш созыври Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш Çессийĕ

Мандат Комиççи Председателĕ депутат А. И. Шахурин тунă докладран

РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕсен составĕ социалисăм кĕрешсе илнисене уççăн кăтартса паракан картинă пулса тăрать. Сталин йулташ тăрăшса та йуратса пăхса çитĕнтернĕ, аслă Сталина, большевикла партине, хамăрăн хăватлă тăван çĕршыва йуратнипе хавхаланса çĕкленсе тăракан вырăс халăхĕ, хамăр çĕршыври, талантсемпе геройсен çĕршывĕнчи пĕтĕм халăхсем влаçăн чи аслă органне—РСФСР Верховнăй Советне—хăйсен чи лайăх представителĕсене суйларĕç.

РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕсен составĕнче Пĕтĕм Сойузри Коммунисен (большевиксен) Партин членĕсем 568 çын тата партире тăманнисем 159 çын. Ку ĕнтĕ Совет халăхĕ большевикла партине вĕçĕ-хĕррисĕр шанса тăнине, вăл Ленин—Сталин партине чунтан йуратса тăнине, коммунисемпе партире тăманнисен блокĕ тĕреклĕ пулнине кăтартса парать. Ку ĕнтĕ пирĕн парти тытса пыракан политикă—пĕтĕм совет халăхĕн политики пулса тăни çинчен каласа парать. (Аллă çупаççĕ).

РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕсем хушшинче: рабочисем—339 çын, хресченсем—195, служăщчисем тата совет интеллигенцин представителĕсем—193.

Депутатсен составĕнче: академиксемпе профессăрсем 13 çын, 24 учител, инженерсем, агрономсем, врачсем, искусствă работникĕсем, поетсем, писателсем тата вĕренекенсем. РСФСР Верховнăй Совечĕн 194 депутачĕ—орденоносĕцсем.

Депутатсен составĕ, Сталин йулташăн: „пултарулă çынсем, талантлă çынсем пирĕн вуншар пин тесе калана чаплă сăмахĕсене калама çук лайăх çирĕплетсе парать.

Пирĕн республикăн Верховнăй Советне бойецсене, командирсене, комиссарсемпе политработниксене, герой-љотчиксене тата танкиссене, мухтавлă пограничниксене—Октаберти Аслă Социалисăмлă револљуци кĕрешсе илнисен шанчăкла, никам кисретейми хуралĕн, хамăр халăх аслă йуратупа йуратса, пăхса усракан Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕн представителĕсене суйлана. (Нумайччен аллă çупаççĕ).

РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕсем пулма Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕн работникĕсене суйланипе совет халăхĕ хăй мухтавлă совет разведкине йуратнине, пирĕн карателнăй органсем туса пыракан ĕçсене пĕтĕмĕшпех ырланине кăтартса пачĕ. (Тăвăллăн аллă çупаççĕ).

Çакăнпа ĕнтĕ пирĕн халăх, тăшмансене пĕтерес тĕлĕшпе туса ирттернĕ ĕçсене пĕтĕмĕшпех ырланине çеç мар кăтартса пачĕ, тата вăл хăй Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕн органĕсемпе пĕрле ĕçлесе партипе совет халăхĕн пĕтĕм тăшманĕсене аркатса тăкма хатĕр тăнине те кăтартса пачĕ.

Депутатсенчен суррине йахăнах—359 çын—аслă шкулсемпе вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнă çынсем.

Депутатсенчен пысăк пайĕ—40 çултан иртмен çынсем.

РСФСР Верховнăй Совечĕн составĕнче 20 çултан иртмен депутатсем 10 çын, 25 çултан иртмен депутатсем 67 çын шутланаççĕ. Ку факт ĕнтĕ—Октаберти Аслă Социалисăмлă револљуци пăхса ÿстернĕ пирĕн совет çамрăкĕсен творчĕствăлă пултарулăхĕ хăвăрт та хăватлăн ÿссе пынине кăтартса паракан калама çук чаплă картинă пулса тăрать. Капиталисăмлă çĕршывсенче çакнашкалли мĕн те пулин пулма пултарать-и вара? Пирĕн парти кăна хамăрăн совет çамрăкĕсем валљи телейлĕ те хаваслă пурнăç туса пама пултарнă тата чăннипех туса пачĕ. (Аллă çупаççĕ).

РСФСР Верховнăй Советне 157 хĕрарăма суйланă. Хĕрарăм-депутатсем пирĕн совет хĕрарăмĕсен тивĕçлĕ представителĕсем пулса тăраççĕ. Вĕсене аслă Сталин ăшшăн пек йуратса, вĕсемшĕн тăрăшать, вĕсем арçынсемпе пĕр танах государствă управленине хутшăнса ĕçлеççĕ, хуçалăхпа куљтурă строителствин пур участкисене те хутшăнса ĕçлеççĕ.

РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕсен составĕнче 37 национаљнăçсен представителĕсем пур.

Ку ĕнтĕ Роççийă Советлă Федеративлă Социалисăмлă Республикĕн тата пĕтĕм Совет Сойузĕн составне кĕрекен пĕтĕм халăхсем тарăн та ниçăçан арканми туслă пурăннине татах тепĕр хут кăтартса парать.

РСФСР Верховнăй Совечĕн составĕ тата депутатсен биографийĕсем—пирĕн парти тата Сталин йулташ кадрсене воспитани парса пăхса ÿстерес тĕлĕшпе туса ирттернĕ ĕç мĕн тери аслă иккенне кăтартса паракан образец пулса тăраççĕ. РСФСР Верховнăй Совечĕн составĕ кадрсене сталинла воспитани парас ĕç чаплăн çĕнтернине кăтартса парать. (Аллă çупаççĕ).

РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕсем—халăх суйланă çынсем. Вĕсемпе пĕтĕм совет халăхĕ тивĕçлипе мухтанать, пĕтĕм совет халăхĕ вĕсемпе пĕр шухăшлă, пĕр кăмăллă.

Пире хăйĕн депутачĕсем пулма суйласа, совет халăхĕ пире аслă та паллă сталинла наказсем пачĕ.

Епĕр, депутатсем, пурте суйлавçăсен наказне асра тытса тăма тата Ленин пек, Сталин пек пулма тивĕç! (Нумайччен, тăвăллăн аллă çупаççĕ).

Аслă вырăс халăхĕн, хамăр республикăра пурăнакан пĕтĕм халăхсен пĕрремĕш депутатне, пĕтĕм халăх депутатне—ийунĕн 26-мĕшĕнче коммунисемпе партире тăманнисен блокĕн кандидачĕсемшĕн сасăлама кайнă чух пĕтĕм суйлавçăсем асра тытса пынă çынна—совет халăхĕн телейне тăвакана, пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен аслă çулпуçне тата тусне—Сталин йулташа суйланă. (Нумайччен тăвăллăн аллă çупаççĕ. „Сывă пултăр Сталин йулташ!", „Урра!" тесе кăшкăрнă сасăсем илтĕнеççĕ).

Степан Никитич Барышĕв

РСФСР Верховнăй Совечĕн чи ватă депутачĕсенчен пĕри (Спасск округĕ, Горький облаçĕ). Вăл РСФСР Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш çеççине усна.

Фото Г. Вайљ (Сойузфото).

РСФС Республикĕн пĕрремĕш созыври Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш Çеççин 1938 çулхи ийулĕн 17-че пулнă ларăвĕ çинчен

Информацилĕ пĕлтерÿ

Ийулĕн 17-мĕшĕнче кăнтăрла 1 сехетре, РСФСР Верховнăй Совечĕн ларăвĕсем пулса иртекен залра, Кремĕлре, РСФС Республикĕн 1-мĕш созыври Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш çеççин виççĕмĕш ларăвĕ пулнă.

Ларăва председател пулса йертсе пыраканĕ—РСФСР Верховнăй Совечĕн Председателĕ депутат А. А. Жданăв.

РСФСР Верховнăй Совечĕ РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕсен полномочийĕсене тĕрĕслени çинчен РСФСР Верховнăй Совечĕн Мандат Комиççи председателĕн депутат А. И. ШАХУРИНăН докладне итленĕ.

Шахурин йулташ РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕсен полномочийĕсене 727 суйлав округĕ тăрăх тĕрĕслени çинчен РСФСР Верховнăй Совечĕн Мандат Комиççийĕ йышăннă постановленине вуласа парать:

„Тĕп Суйлав Комиççи РСФСР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе кашни депутат пирки уйрăммăн тăратнă мĕн пур суйлав документĕсемпе материалĕсене тĕрĕслесе тухнă хыççăн, РСФСР Верховнăй Совечĕн Мандат Комиççи çакна палăртать:

1. Пĕтĕм 727 суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне депутатсем суйлассине РСФСР Конституцийĕ тата „РСФСР Верховнăй Советне суйламали Положени" тăрăх тата вĕсемпе пĕтĕмпех килĕшÿллĕн туса ирттернĕ.

2. Пĕр-пĕр суйлав округĕ тăрăх суйлава улăштарма нимĕнле сăлтав та çук, çавăн пекех тата РСФСР Верховнăй Советне депутатсем суйлас тĕлĕшпе Конституцине тата суйлав Положенине пăсни çинчен уйрăм суйлав округĕсем тăрăх та, Тĕп Суйлав Комиççинче те нимĕнле жалăбăсемпе зайавленисем те çук.

Çакăнта каланисем тăрăх РСФСР Верховнăй Совечĕн Мандат Комиççийĕ РСФСР Верховнăй Совечĕн Тĕп Суйлав Комиççинче регистрациленĕ мĕн пур депутатсен полномочийĕсене тĕрĕс тесе йышăнать, вăл депутатсен спискине „Известия советов депутатов трудящихся СССР" хаçатăн 1938 çулта тухнă 151-мĕш номĕрĕнче пичетлесе кăларнă".

Мандат Комиççин докладĕ тăрăх прениненче депутатсем В. И. ЛЕБЕДЕВ-КУМАЧ (Фрунзе округĕ, Мускав хули) тата М. В. САРЫЧЕВА (Загорски округ, Мускав облаçĕ) тухса каланă.

Мускав, Ленинград тата Горький облаçĕсенчи, Башкир тата Тутар Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикĕнчи депутатсен ушкăнĕнчен депутат М. В. САРЫЧЕВА панă сĕнÿ тăрăх, РСФСР Верховнăй Совечĕ Мандат Комиççин докладĕ тăрăх çакăн пек постановлени йышăнать:

„Мандат Комиççи докладне итлесе, Роççийă Советлă Федеративлă Социалисăмлă Республикĕн Верховнăй Совечĕ çапла йышăнать:

1. РСФСР Верховнăй Совечĕн мĕн пур 727 суйлав округĕ тăрăх суйланă тата РСФСР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп Суйлав Комиççи регистрациленĕ депутатсен полномочийĕсем тĕрĕс тесе йышăнакан Мандат Комиççи докладне çирĕплетес.

2. Роççийă Советлă Федеративлă Социалисăмлă Республикăн Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп Суйлав Комиççи ĕçне пĕтнĕ тесе шутлас".

Мандат комиççин докладĕ тăрăх постановлени йышăннă хыççăн, РСФСР Верховнăй Совечĕ РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕсене депутат обйазанăçĕсене пурнăça кĕртнĕ чух тухакан расхутсене тÿлесси çинчен тăракан ыйту çине куçать. Депутат И. А. ВЛАСАВ сĕннипе РСФСР Верховнăй Совечĕ çапла йышăнать:

„1. РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕсене депутат обйазанăçĕсене пурнăça кĕртнĕ чухне тухакан расхутсене валљи уйăхсерен 600-шер тенкĕ парса тăмалла тăвас.

2. РСФСР Верховнăй Совечĕн çеççийĕ вăхăтĕнчи расхутсем валљи депутатсене суткăнăй 100-шер тенкĕ памалла тăвас.

3. РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕсем валљи РСФС Республикĕн мĕн пур чукунçулĕсемпе шыв çулĕсем тăрăх çÿреме йаланах тÿлевсĕр билетсем памала тăвас.

4. РСФСР Верховнăй Совечĕн смети тăрăх РСФСР Верховнăй Совечĕн Председателĕ распорйаженине депутатсемпе çыхăнса тăмали тата представителствă расхучĕсене валљи çулталăкра 150 пин тенкĕ памала тăвас".

Çак ĕçсене тунă хыççăн РСФСР Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш çеççин виççĕмĕш ларăвĕ хупăнать.

ССРС Верховнăй Совечĕн Президиумĕн Указĕ

„Мускав" самољот екипажне наградăсем парасси çинчен

Мускав—Владивосток маршрутпа пĕр ларнăсăр инçене паттăрăн вĕçсе тухнăшăн тата çав вĕçев вăхăтĕнче калама çук пысăк хăйулăхпа паттăрлăх тата маçтăрлăх палăртнăшăн:

1. „Совет Сойузĕн Герой йатне памалли Положени" тăрăх, Владимир Константинович Коккинаки йулташа—„Мускав" самољот екипажĕн командирне,

Александр Матвейевич Брйандинский йулташа Совет Сойузĕн Геройĕ йатне парас тата Ленин орденĕ парас.

2 Вĕçевре пулнă В. К Коккинаки тата А. М. Брйандинский йулташсене пĕр вăхăтлăх награда 25-шер пин тенкĕ укça парас.

ССРС Верховнăй Совечĕн Президиум Председателĕ
М. КАЛИНИН.

ССРС Верховнăй Совечĕн Президиум Çекретарĕ
А ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1938 ç. ийулĕн 18-мĕш.

В. К. Коккинаки тата А. М. Брйандинский йулташсем.

Совет Сойузĕ тăрăх

● Ийулĕн 18-мĕшĕнче Мускава Чехословакири спорт делегацийĕ килнĕ. Делегацире 21 çын. Вăл делегаци 240.000 членлă 23 спорт организаци йачĕпе килнĕ.

● Мускавпа Стокголљм (Швеци столици) хушшинче самољотсем тăтăмах çÿреме пуçланă. Ийулĕн 18-мĕшĕнче Мускавран 8 сехетре вĕçсе тухнă икĕ моторлă хăвăрт вĕçекен самољот 15 сехет те 8 минутра Стокголљм аеродромĕ çине чĕререх анса ларнă.

Тырпулсене хăвăрт та тăкаксăр пуçтарса кĕртер!

МАШИНĂСЕМПЕ ТУЛЛИН УСĂ КУРАР!

Ăмăртса ĕçлекен колхозсенче

Патăрйел. Тырпулсене вăхăтра тата катартулăн пухса кĕрес тĕлешпе „Первомайск“ колхоз Алманчăри Ленин йачĕпе тăракан колхозпа ăмăртса ĕçлет.

„Первомайск“ колхоз ийулĕн 16-мĕшĕнче массăлăн ыраш вырма тухнă. Тăваттăмĕш кун ĕнтĕ хĕрсех ыраш выраççĕ. Ку колхозра ăмăртса ĕçлесси тивĕçлипе сарăлса пырать.

Тыра вырма тухнă кунах бригадăсенче производствăлă канашлусем пулса иртрĕç. Çав канашлусенче тырпулсене пĕр тăкаксăр пуçтарса кĕрес тĕлĕшпе татăклă обйазательствăсем илчĕç. Ырашa 5 кун хушшинче вырса пĕтерме палăртнă. Çавнашкалах аван çапас тата государствăна тырă парас йенĕпе çирĕп сруксем йышăннă. Ĕç нормисене тепĕр хут пăхса тухса, жнейкăпа 6 гектар вырас вырăнне 8 гектар вырма пулчĕç.

Çакăн хыççăн стаханăвла ĕçлес йухăм çĕкленчĕ. Виççĕмĕш бригадă хăйĕн участкине вырса пĕтерчĕ. Пурĕ 36 гектар ыраш вырнă.

Иккĕмĕш бригадăра С. Латыпăв жнейкăпа малтанхи кун пĕр сменăра 9 гектар, иккĕмĕш кунне 10 гектар вырнă. Виççĕмĕш бригадăри машиновед Й. Леонтйĕв жнейкăпа малтанхи кун 10 гектар, иккĕмĕш кунне 12 гектар вырнă.

Колхозра столовăй ĕçлет. Кашни бригадăра кашни кун çтена хаçачĕсем кăларса тăраççĕ.

Ленин йачĕпе тăракан колхозра та бригадăсем, звеносем, колхозниксем пĕрпĕрин хушшинче ăмăртса ĕçлеççĕ.

Иккĕмĕш бригадăра ĕçе тĕрĕс йĕркеленĕ. Кашни колхозник ĕçе тĕплĕн пĕлсе тăвать.

В. Карушĕв колхозник жнейкăпа вырас нормăна кулленех 150 процент тултарса пырать. А. Антипăвă, Д. Павлăв йулташсем кĕлте çыхас нормăна 200-шер процент тултараççĕ.

О. Йегорăв, Федăрăв колхозниксем çурлапа вырас нормăна икшер хут ытларах тултарса пыраççĕ. Вĕсен ĕç пахалăхĕ йаланах аван.

Ăмăртура „Первомайск“ колхоз малта пырать.

Н. Пушкин.

Аван çапма тытăнчĕç

ЙЕЛЧĔК, ийулĕн 19-мĕшĕ. Пур колхозсем те хĕрсех ыраш вăраççĕ. „Звезда“ тата „Ким“ колхозсенче аван çапаççĕ. Лаш Тайабари Крупскайа йачĕпе тăракан колхоз ийулĕн 19-мĕшĕнче государствăна тырă пама тытăнчĕ.

Колхозсен уйхирĕсенче социалисăмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать. Колхозниксемпе колхозницăсем ĕç нормине ытлашшипех тултарса пыраççĕ. „Звезда“ колхозра Волкăвă кунне 1020 кĕлте, Поликарпăвă 895 кĕлте çыхса пыраççĕ. „Ким“ колхозра Федăрăв машиновед жнейкăпа сменă хушшинче 11 гектар вырса пырать. Васильйĕвă колхозницă 900 кĕлте çыхать.

Ыран 3 колхозра ыраш вырса пĕтереççĕ.

Бурмистров.

2.510 гектар вырнă

Шăнкăртам районĕнче ийулĕн 19-мĕшне кĕрхи тырăсене пурĕ 2510 гектар вырнă, йе вăл 53 процент пулать. „Сталь“ тата „Кзыл-Тан“ колхозсем ыраш вырса пĕтернĕ. „Кзыл-Тан“ колхоз 59 гектар, „Сталь“ колхоз 106 гектар ыраш вырнă. Çак колхозсенче аван çапма тытăннă.

Кзыл Чишмари „Майак“ колхоз ийулĕн 19-мĕшĕнче ыраш вырса пĕтерсе, аван çапма тытăннă. Ку колхозра жнейкăсемпе туллин усă курнă. Жнейкăсемпе вырас нормăна йаланах 140—150 процент таран тултарса пынă. Т. Сабурилина, М. Абайдулина колхозницăсем нормă тăрăх 400 кĕлте çыхса пырас вырăнне, 1600-шер кĕлте çыхса пынă.

Малтанхи кунсенчи çитменлĕхсем

ЙĔПРЕÇ, ийулĕн 19-мĕшĕ (телефонпа). Районри малта пыракан колхозсем ийулĕн 17-мĕшĕнче ыраш вырма тухрĕç.

Малтанхи кунах, „Çĕнтерӳ“ колхозри 1-мĕш бригадăри жнейкă кăнтăрлаччен ĕçĕ çĕмĕрĕлнĕ.

Ача амăшĕсем ача йаçли усма ыйтаççĕ, анчах ăна организацилемен, столовăйсем те йĕркелĕ ĕçлемеççĕ.

Пĕрремĕш бригадăн бригадирĕ Петров йулташ колхозниксем ĕçленĕ çĕрте сайра хутра çеç пулать.

„Нива“ колхозра пайанхи куна çитсе те ĕç планĕ туман. Çавăнпа та 2 жнейкă пĕр участкă çинче ĕçленипе, вĕсем мĕнчул вырнине пĕлме çук.

Кунта ĕç норми те тĕрĕс мар: алăпа вырма та 200 кĕлте, жнейкăпа вырнине çыхма та 200 кĕлте.

Колхозсен уйхирĕсенче комбайнсем ĕçлеме тытăнман-ха.

Михайлăв.

Махоркă çинчен манмала мар

Хĕрлĕ Чутай районĕнче кăçалтан пуçласа махоркă лартса тума тытăннă. Анчах районра махоркă лартса тăвас ĕçе хакламанни палăрать. Хăшпĕр колхозсем махоркă агротехникине пăснă. „Хĕрлĕ Чутай“ колхозра пĕр гектар çине нормă тăрăх 90—100 пин кăк лартас вырăнне 45 пин çеç лартнă. Анчах çак лартнă махоркăна та кирлĕ пек пăхса çитĕнтерни çук. Çĕре çемçетмеççĕ, çӳмкурăксене çумламаççĕ. „Радио“ тата „Хĕрлĕ Туканаш“ колхозсенче те ĕçсем çавнашкалах. Çак колхозсенче махоркă лартнăранпа вара çĕре пĕре те çемçетмен. Агротехникă тăрăх махоркă лартнă лаптăка 5—6 хутчен çемçетсе, çумкурăксене çумламалла. Çакна чылай колхозсенче пăхăнса ĕçлемеççĕ-ха.

Паллах, çакăн пек пулса пыни райçĕрĕç пайĕ колхозсене татăклăн йертсе пыманнинчен килет. Колхозсенче махоркă ĕçĕпе ĕçлекен колхозниксене урăх çĕре куçарнă пирки, махоркă хуçасăр тăрса йулнă.

Çӳлте асăннă колхоз руководителĕсем махоркăна чи кирлĕ вăхăтра тивĕçлипе пăхмасан тухăçлă махоркă туса илме май çуккине ăнланса илмен.

Махоркă çине çакăн пек тирпейсĕр пăхнине пĕтерес пулать. Районра махоркă ĕçĕнче „Коминтерн“ тата „Красное Сормово“ колхозсем малта пыраççĕ. Çак колхозсен паха опычĕсене ытти колхозсене куçарас пулать.

Махоркăна пăхса çитĕнтерес тĕлĕшпе Çĕмĕрле тата Трак районĕсем те мухтанма пултараймаççĕ. Тухăçлă махоркă туса илес тесен халь мĕн тумалла-ха? Чи малтанах, звеносем туман çĕрте 3—4 çынтан йатарласа звено тумалла. Вĕсен махоркă лартнă участкăсем çинче тĕплĕн ĕçлесе пымалла. Звеносенчен агротехникăлă ĕçсене тĕрĕс тата вăхăтра пурнăçласа пынине ыйтмалла.

Махоркăна пуçтарса кĕме тытăниччен махоркă акнă лаптăксене 4 хутран кайа мар çемçетмеле, çавнашкалах çумламала.

Махоркă чечекĕсене вăхăтра татса пăрахас пулать. Кунпа пĕр вăхăтрах кунасен айалти кивĕ çулçисене тасатмала, кашни туна çине 8—9 çулçă çеç хăвармала. Айкисенчи турачĕсене 4—5 хутран кайа мар тасатас пулать.

Махоркăна апат пама кирлĕ çĕрте апат памала. Çĕре çемçетмели вырăнти йапаласемпе апат пама пулать. Апат пама чăх-чĕп тислĕкĕ чи лайăх йапала пулса тăрать. Пĕр гектар махоркăна апат пама 4 центнĕртан пуçласа 8 центнĕра çитиччен чăх-чĕп тислĕкĕ кирлĕ. Фекали 25—40 центнĕр, тислĕк шĕвеке 25—30 центнĕр кирлĕ пулать.

Минераллă удобренисемпе çĕре кура апат пама кирлĕ. Тухăçлă махоркă туса илес пулсан агротехникăн пур ĕçĕсене те вăхăтра тата тĕрĕс туса пымала.

Халь махоркă лартнă участкăсем çинче хĕрӳ ĕç пуçланчĕ. Çавăнта ĕнтĕ ĕçе тĕрĕс организацилесе, махоркă ĕçне пысăк пахалăхпа туса пырас пулать.

Й. К.

Малта пыракансĕм ыраш вырса пĕтереççĕ

ТУРХАН, ийулĕн 19-мĕшĕ (телефонпа). Колхозсем пурте ыраш вырма тухнă. „Совет“, „Осоавиахим“, „Çĕнтерӳ“ колхозсем ыран ыраш вырса пĕтереççĕ. Колхозниксем хушшинче Шчербиновĕцсем чĕнсе каланине сӳтсе-йавни нумай пулăшрĕ. Кунсăр пуçне тата Чăваш, Тутар, Мордва республикĕсем хушшинче йышăннă социалисăмлă ăмăрту догăвăрĕн текстне пичетлесе кашни колхоза панă.

„Осоавиахим“ колхозра машиновед Цветков йулташ жнейкăпа кунне 8,5-шар гектар вырать.

Тырпулсене пухса кĕме тухсан малтанхи кунсенче çитменлĕхсем те нумай палăрчĕç. „Совет“ колхозра 4 кун хушши алăпа вырсан тин машинăна уйа илсе тухнă. Колхозсенче ампарсене тасатса дезинфекцилес ĕç те йапăх пырать. Чылай çĕрте витнĕ итемсене халь те йусаса пĕтермен.

Кĕлтесене вăхăтра сыхмаççĕ

Ийулĕн 19-мĕш тĕлне Патăрйел районĕнчи колхозсем пурте ыраш вырма тухрĕç, вăрман йенчи колхозсем çеç—5 колхоз тăхтасарах тăраççĕ. Тырпулсене пухса кĕртес ĕçе хăшпĕр колхозсенче аван йĕркеленĕ. „Красное знамя“ колхозри Убакин йулташ бригади ийулĕн 14-мĕшĕнче ыраш вырма тухса ийулĕн 17-мĕшĕнче вырса пĕтернĕ. Çав колхозри Быкашина йулташ кунне 1200 кĕлте çыхнă. „Красный Партизан“ колхозра жнейкăсемпе кунне 10 шар гектар вырса пыраççĕ.

Анчах пур колхозра та апла мар. „Правда“, „Путь Ленина“ колхозсенче тăкаксемпе начар кĕрешеççĕ. Кунта жнейкăсем çумне тăканакан тырă пĕрчисене пухса пымали йешчĕксем лартман, жнейкăсен кĕреплисем те çук. „Путь Ленина“ колхозра вырнă тырра хыççăнах çыхса пымаççĕ, ирхине тăвата сехет вырăнне çичĕ сехетре тин ĕçе тухаççĕ. Бригадирсем уйа тухса курмаççĕ.

Малтанхи кунсенче чылай колхозсенче культмассăлă ĕç пачах çителĕксĕр пулнă. Халь тин вăл ĕçе йĕркелеме тытăннă.

„Правда“ колхозра машинăпа вырассине хирĕçле шухăшсем пулнă. „Красный партизан“ колхозра колхоз председателĕ Кокарĕв йулташ хăй те машинăпа вырассине хирĕç тăнă.

Çавăн пек çитменлĕхсем ытти хăшпĕр колхозсенче те пур. Вĕсене халех пĕтермеле.

Вăрнарсем хатĕрленсе çитмен

ВĂРНАР. (Хамăр корр.) Ийулĕн 15-мĕшĕнче Йампахтинăри „Партизан“, Йалтикасри „Пĕрлешӳ“ колхозсем суйласа ыраш вырма тухрĕç. Ийулĕн 20-мĕшĕнче районра пур колхозсем те ыраш вырма тухаççĕ.

Хĕрӳлĕ ĕç пуçланчĕ пулсан та, район халĕ те хирти тырпулсене пухса кĕме çителĕклĕ хатĕрленсе çитмен. Колхозсенче 261 жнейкăран 218 жнейкă çеç йусаса хатĕрленĕ, ытти жнейкăсене йусама запаслă пайĕсем çук.

Колхозсенче витнĕ итемсем тăвас ĕç ытла та йапăх пырать. Кăкшăм, Чаллă Кăкшăм, Тури Карачура, Тури Кăканар, Авăрçырма, Алменĕвă колхозĕсенче халĕ те витнĕ итем тума тытăнман.

Санарпуçĕнчи Литвинăв йачĕпе тăракан колхоз, Чăрăш Муратри „11 лет Чувашии“ колхоз тата „Майăн 1-мĕш“, Каганович йачĕпе тăракан колхозсенче май уйăхĕнче тума тытăннă витнĕ итемсене халь те туса пĕтермен.

Чăрăш Муратри колхозра (колхоз председателĕ Çмирнов) 2 жнейкă пур, вĕсене халĕ те йусаман, тырă хумали ампарсене дизинфекцилесе тасатман, бригадăсенче хирти тырăсене пухса кĕмели плансем туман, ĕç вăйне вырнаçтарса йĕркелемен. Ĕç вăхăтĕнче пĕрлешӳлĕ апатланма тата ача йаçли тума тырă уйăрса хăварна пулсан та, вĕсене йĕркелемен.

Райçĕрĕç пайĕнче ĕçлекенсем те начар ĕçлекен колхозсенче сахал пулаççĕ, вырăнсене тухса практикăлă пулăшу памаççĕ, теççĕ районри колхозниксем.

Васильйĕв.

Феликс Дзержинский

Феликс Дзержинский вăл Ковно хулинчи гимнази ученикĕ пулнă чухнехи портречĕ усраннă: таса та çирĕп сăн-пит, куçĕсемпе тинкерсе пăхать.

Унчухне вăл 17 çулхи çамрăк пулнă. Анчах Феликс Дзержинский çав вăхăтрах политикăна ăнланас йенĕпе ӳссе çитнĕ,—Литвари социал-демократла организацин хастар ĕçлекен членĕ пулнă.

Çамрăк Феликс 17 çулхи çамрăк чухнех хăйне ваçьчи ĕмĕрлĕхе революционерăн йăвăр çулне суйласа илнĕ. Хăй хĕрӳлĕ агитатăр пулса, вăл ыттисене патша власне хирĕç, капитализма хирĕç кĕрешме ченнĕ. [illegible] не çĕре пур çĕре те çитнĕ. Çирĕп пулнă пулин те, партири йулташĕсем ăна часах пыйăккăн шанакан пулнă. Ăна пысăкрах та ответлăрах ĕçсем парса пынă. 20 çулта чухне вăл Ковно хулинче стачкăна йертсе пынă, çав çулта чухнех унăн жандармсемпе, тĕрмепе тата ссылкăпа паллашма килнĕ.

Феликс Дзержинский хăйĕн пĕтĕм пурнăçне рабочи клас ĕçне панă. Тĕрмерен тухсанах йе инçетри ссылкăран тарсанах, вăл çав вăхăтрах партилĕ ĕçе хамăр çĕршывра йе чикĕ леш йенче тума тытăннă. Унăн партири вăрттăн йачĕсем—Йацек, Астроном, Франк, Йузеф пулнă. Вăл парти организацийĕсене чăмăртантарса ӳстерсе пынă, рабочисен массисене революцилĕ воспитани панă, нацилĕ пӳленчĕке хирĕç вăйлă кĕрешнĕ. Ăна каллех тĕрмене хупнă. Вăл каллех тарнă. Улттăмĕш хут тата йулашки хут Феликс Дзержинскине 3 çуллăха, унтан 6 çуллăха катăргăна йанă пулнă. Патша привительстви ăна революцилĕ ĕçсемшĕн, ссылкăран нумай хут тарнăшăн тавăрасшăн пулнă.

Вăл февраль революци пуличченех Мускаври централта ларнă. Тĕрмесенче ларни, професcилĕ революционерăн калама çук йăвăр та хăрушă пурнăçĕ—нимĕн те, нихçан та унăн кĕрешес хăватне ниçсĕлтереймен.

1917 çулта февральти революци хыççăн Феликс Дзержинский катăржнăй централтан хăтăлса тухнă. Çав вăхăта ĕнтĕ вăл хăватлă та пиçсе çитнĕ боец, хăйĕн ĕмĕр мăнни ĕçĕсене тума хатĕрленсе çитнĕ çын пулнă.

Дзержинский 1917 çултанпа парти Тĕп Комитет членĕ, Октябĕрти татăклă çапăçу кунĕсенче Çар-Революцийĕ Комитет членĕ, [illegible] кустарĕ тата председателĕ. [illegible] пулнă [illegible] буржуазийĕсем, банкирсем, хапрăк-савăт хуçисем, патша бюрократин йут çĕршывсене тарнă тепрейчĕкĕсем,—Советла Российăн тăшманĕсем пурте Дзержинские хăйаррăн ылханнă. Дзержинские, ГПУ-на буржуази курăймании тата ылхачии мĕне кăтартса тăнă-ха? Ун çинчен Сталин йулташ пит лайăх каласа панă: „Революции хайар тăшманĕсем ГПУ-на йатлаççĕ, апла пулсан, ГПУ тĕрĕс ĕçлет“.

Ленинăн чи лайăх ученикĕсенчен пĕри, Дзержинский буржуазишĕн аçа-çиçĕм, революцин сыхă хуралçи пулнă. Тăшмансене пĕтерес ĕçре Феликс Дзержинскин алли нихçан та чĕтремен, çав вăхăтрах вăл вăйă кăмăллă, çемçе чĕрелĕ çын пулнă.

Дзержинский тăшмансене ленинла курайман, çав вăхăтрах вăл çынна ленинла аслă йуратупа йуратнă.

190. çулта вăл ссылкăран хăйĕн Альдоне йатлă йăмăкĕ патне çапла çырнă:

„Хам та пĕлместĕп темшĕн епĕ ачасене никама йуратниччен ытла йурататăп... Епĕ вĕсене йуратнă пек хĕрĕрăма йуратма нихçан та пултарас çук, мăн шутпа епĕ хамăн ачасене (Ф. Э. хăй палăртса çырнă) урăх çынсен ачисене йуратниччен ытла йуратайас çук. Часчасах мана çапла туйăнать: амăшĕ те епĕ йуратна пек хĕрӳлĕ йуратаймасть пуле“.

Çынна вăл çапла кĕççĕ, [illegible] çынсенчен ыйтасси унăн нихçан [illegible] хăй пекех пулма вĕрентсе пынă.

Вăл йаланах, нихăçан канмасăр ĕçре, кĕрешӳре пулнă. Арăмĕ патне йанă çырура хăйĕн 1918 çулти пурнăçĕ çинчен вăл çапла калать—„салтак пурнăçĕ, унăн канăç çук, мĕншĕн тесен çунакан çурта çăлса хăварас пулать. Килти çынсемпе харпăрхăй çинчен шухăшлама вăхăт çук. Ĕç тата кĕрешӳ—тамăкри майлах. Анчах манăн чĕре çак кĕрешӳре те чĕрех-ха, вăл иртнĕ вăхăтра мĕнле пулнă, халĕ те çавах. Епĕ вăхăта пĕр чарăнмасăр ĕçлесе иртеретĕп, çапла ĕçлени вĕçне çитиччĕнех пострa тăмă кирлĕ“, тенĕ.

Вăл пăхса ӳстернĕ чекистсен çарĕ—малта пыракан партийĕцсен, революцин мăйăнма пĕлмен борецĕсен çарĕ.

Чекист—хăйулăхпа тӳсĕмлĕхĕн, партилĕ принциплăхăн, сыхлăхпа сивĕчлĕхĕн, организацилĕ ĕçсене ăста туса пырасси тĕслĕхĕ.

Чекист—хисеплĕ йат. Вăл йата илтсеен çын революци тăшманĕсене хирĕç, революцийе, совет влаçне çирĕплетессишĕн кĕрешсе Феликс Дзержинский шкулĕ витĕр тухнă.

Чи лайăх чекистсем Феликс Дзержинскинчен вĕреннĕ, вăл вĕсене хĕрӳлĕн ĕçлеме, сăмах нихăçан та ĕçрен уйрăм пулмала мар тума вĕрентнĕ.

Дзержинский ЧК ĕçне йаланах рабочи класăн таса [illegible] пынă, [illegible] ЧК [illegible] шухăшланă. [illegible] вĕсене пурне те тупса тытса çĕмĕрсе пынă.

„Пролетариатăн çивĕч хĕççи“ Феликс Дзержинский аллинче тĕл тивнĕ те, вăйлă касна. Вăл тăшмансем совет влаçне хирĕç тунă—Локкарт заговăрне, „сулахай“ есерсен восстанине, савинковщинăна, „тактический центр“ тата „национальнăй центр“ тенĕскерсене, „Красная Горка“-ри заговăра, антоновщинăна, диверсилĕ бандăсене тăрă шыв çине кăларса тĕп туса пынă. Тăшмансем совет влаçне хирĕç революцилĕ çĕршыва хирĕç тата та нумай тĕрлĕ майсемпе кĕрешнĕ, вĕсене пурне те ЧК çирĕп аллăпа йарса тытса пăчăртаса пынă.

Çав вăхăтрах тата Феликс Дзержинский халăх хуçалăхне хăпартассишĕн, ăна социалисăмлă çулпа йарассишĕн чи пуçласа кĕрешме тытăннă большевик-организатăрсенчен пĕри пулнă. Феликс Дзержинский çул йĕр халăх комиссарĕ, унтан ВСНХ председателĕ пулнă.

Контрреволюцийе хирĕç кĕрешӳри аслă организатăр, вăл тата çав вăхăтрах халăх хуçалăхĕнчи чаплă руководителĕ пулнă.

Ленинла партин шанчăклă, вĕçĕмсĕр паранна ывăлĕ, вăл сталинла тĕп çулйĕршĕн хĕрӳлĕн те хăватлăн кĕрешнĕ. Ленин—Сталин партине хирĕç кĕрешекенсене Дзержинский пĕтĕм хайарлăхпа курайман. Вăл предателсене—Троцкине, Пйатакова, Зиновйĕва, Каменĕва тата вĕсем хыççăн кайакансене—калама çук ылханса, питлесе пынă.

1926 çулти ийуль,—Тĕп Комитет пленумĕ. Дзержинский партири изменниксемпе предателсене хирĕç хĕрӳлĕ сăмах калать. Ку вăл унăн йулашки, вилес умĕнхи сăмахĕ пулнă. Вăл хăйĕн сăмахне каласа та пĕтереймен. Кăкăр питĕрĕннипе пула унăн трибунă çинчен анмала килнĕ. Вăл [illegible] пулмине [illegible] [illegible] çуккине [illegible] те. Дзержинский хăй пачне [illegible] иленĕ, тăшмансене хирĕç трибунă çинчен калама ĕлкĕреймен сăмахсене калаçă. Врачсем ăна лăплантма хушнă. Дзержинский вĕсене: сывалатăп, лайăхрах туйăнкан пултăм, тенĕ, ан чăрмантарччĕр тесе, вĕсене кайма каланă.

Калаççа пĕтернĕ. Феликс Дзержинский пурин çинчен ыйтса пĕлнĕ. Унтан тăнă та килне кайнă, килне çитсен нумай та вăхăт иртмен—вăл вилнĕ.

Дзержинский йулашки минутченех парти ĕçĕшĕн, рабочи клас ĕçĕшĕн, пĕтĕм халăх ĕçĕшĕн вĕçĕмсĕр кĕрешсе пынă.

Феликс Дзержинский вилсен Сталин йулташ çапла çырнă:

„Халĕ, унăн тупăкĕ умĕнче, Дзержинский утса тухнă пĕтĕм çула—тĕрмесенче, катăргăра, ссылкăра пулнисене, контрреволюципе кĕрешмели Чрезвычайлă Комиссинче ĕçленине, ишĕлнĕ транспорта ура çине тăратнине, çамрăк социалисăмлă промышленнăç строительствине аслă илетĕн те,—çав вĕрене тăнă пек пурнăçа пĕр сăмахпа каласа парас килет: çунни. Çунни тата йăварлăхсене хирĕç кĕрешӳри геройла паттăрлăх“.

Коммунисла парти, чи малтан Сталин йулташ сыхăлăхлă та çивĕч куçлă пулнипе епĕр революци тăшманĕсене татах тепĕр хут çĕнтертĕмĕр. Сталин йулташ пире йут çĕршывсенчи разведкăсен чейе те тискер мелĕсене палласа илме, вĕсене тара кĕрĕшнĕ фашисла йытăсен—троцкиссен, бухаринĕцсен, буржуалă националиссен тактикипе усал планĕсене палласа илме, вĕсене тупса тытма вĕрентрĕ.

Шалти ĕçсен Халăх Комиссариатне вăхăтра çирĕплетнĕ. Ăна йертсе пыракан Н. И. Йежов йулташ, Сталинăн ученикĕ тата сорăтникĕ, совет разведкин аиçесĕр пысăк вăйĕ, мĕнрине Ф. Э. Дзержинский пекех таçăиак та [illegible] [illegible] çухăлса тăнинче. [illegible] тăраканин, халăхăн интересĕсене çав тери уççăн палăртса тăраканни, халăх кĕрешсе илнисене сыхласа тăраканни—тĕнчере урăх пĕр государствă та çук“,—тесе каланă Йежов йулташ.

Троцкисла-бухаринла шпионсене, çынвĕлеренсене, диверсантсене тата сăтăрçăсене, йут çĕршывсенчи разведкăсен заданийĕсем тăрăх сăтăр туса пынăскерсене, тупса тытса тĕп тунă. Пирĕн çĕршыва тăшмансем пысăк хăрушлăх кӳрсе тăнă, çав хăрушлăха сирсе пăрахнă. Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕ—„революцин канăçсăр хуралçи“—Н. И. Йежов йертсе пынипе тăшмансене, Ф. Э. Дзержинский йертсе пынă чухнехи пекех, ним шеллемесĕр тĕп туса пырать.

Епĕр капиталисăмлă йĕри-таврарăлăра пурăнатпăр. Тăшман çаплах пирĕн çĕршыва шпионсемпе диверсантсене йарса тăрать. Совет халăхĕ совет разведкипе çирĕп çыхăнса тăни, Феликс Дзержинский пуçласа йанăскер, революцилĕ строительствăпа революцилĕ кĕрешӳ çулĕсенче çирĕпленнĕскер, епĕр майлине те çĕнтерсе пырас сии шанчăкĕ пулса тăрать.

А. Ерлик.

ПАРТИ ПУРНӐҪӖ

Отчотпа суйлав пухӑвӗн решенийӗсене пурнӑҫлатпӑр

Кӑҫалхи апрелӗн 13—15-мӗшсенче пулса иртнӗ отчотпа суйлав пухӑвӗ пединститутри партком ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене палӑртса, хытӑ критиклерӗ. Пренире 23 ҫын тухса каларӗҫ. Вӗсем ҫаксене кӑтартса пачӗҫ: партком ҫителӗклӗ сӑлтавсӑрах Софрошкинпа Андрейӗв йулташсене партирен кӑларнӑ, самокритикӑ вӑйсӑр пулнӑ. Партком коммуниссене панӑ порученисем мӗнле пурнӑҫланса пынине ҫителӗклӗ таран тӗрӗслесе пыман, коммунис-студентсем вӗренӳ ӗҫӗнче малти ретре пырас тӗлӗшпе сахал ӗҫленӗ. Ҫавӑн пекех сӑтӑрла ӗҫсен йулашкийӗсене пӗтерес тӗлӗшпе те институтри пӗтӗм коллектива ҫителӗклӗ мобилизацилемен. Коммунис-преподавателсем хӑйсен наукӑла квалификацине ӳстерессипе кайа йулса пынӑ. Институтра вӗренӳ ӗҫӗн пахалӑхне кирлӗ вырӑна лартман. Партком ӗҫӗнче формализмӑм пурри палӑрнӑ.

Ҫӗнӗрен суйланӑ партком малашне мӗнле ӗҫлемелине кӑтартса пуху резолюци йышӑнчӗ.

Партком хальхи вӑхӑтра ҫак задачӑсене мӗнле пурнӑҫласа пырать-ха?

Партком, чӑн малтанах, малашне мӗнле ӗҫлесе пымалине тӗплӗн кӑтартса план турӗ. Ку плана коммуниссен пухӑвӗнче сӳтсе-йавса йышӑннӑ.

РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсен суйлавне хатӗрленсе иртерне вӑхӑтра пирӗн организаци 13-мӗш суйлав участокӗнче политикӑлӑ агитацине организацилесе йертсе пычӗ. Ҫавӑн пекех Йакимӑвкӑпа Усадкӑ йалсовечӗсенче те политикӑлӑ агитацине организацилерӗмӗр. Коммуниссемпе сочувствуйушчисем политикӑлӑ агитацине организацилессипе мӗнле ӗҫлени ҫинчен партком хӑйӗн ларӑвӗсенче тӑтӑшах отчотсем итлесе, тӗрӗслесе пычӗ.

Коммуниссемпе сочувствуйушчисем хӑйсене шанса панӑ ӗҫе пит тӗ тӑрӑшса пурнӑҫларӗҫ. Уйрӑмах: Дорофейӗвӑ, Мигушовӑ, Орловӑ, Николайӗв, Никитин тата Семенӑв йулташсем лайӑх ӗҫлесе пычӗҫ.

Пединститутра вӗренекен партире тӑман студентсем те халӑх хушшинче политикӑлӑ агитаци ӗҫне организацилес тӗлӗшпе тимлӗн ӗҫлерӗҫ. Шупашкар хулинче кӑна пединститутран 100 агитатӑр ӗҫлерӗ. Кунсӑр пуҫне Мильутинскиха ҫуракан савӑтри рабочисем хушшинче 35 агитатӑр ӗҫлерӗҫ.

Халӑх хушшинче политикӑлӑ агитаципе хастарлӑн ӗҫленӗ йултăшсем вӗренӳре те кайа йулса пымарӗҫ. Вӗсем ӳсе ҫитӗнчӗҫ, политикӑ тӗлӗшпе ҫирӗпленчӗҫ. Партире тӑман преподавателсем хулари рабочисемпе служӑшчисем хушшинче тӗне хирӗҫ лекцисем, докладсем туса панӑ. Тӗнчери лару-тӑру ҫинчен докладсем нумай тунӑ.

Партире тӑракан тата партире тӑман преподавателсемпе студентсем РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсен суйлавне хатӗрленсе иртерне вӑхӑтра хастарлӑн ӗҫлесе пычӗҫ. В. Т. Харитонӑв коммунис РСФСР Верховнӑй Совечӗн округри суйлав комиссийӗн председателӗ, Бокарӗвпа Васильйӗв сочувствуйушчисем тата Желтов комсомолец доверённӑйсем пулса ӗҫлерӗҫ. Отличнӑ вӗренекен студент Потапӑв округри суйлав комиссин секретарӗ пулса ӗҫлерӗ.

РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсен суйлавӗ вӑхӑтӗнче ӗҫленӗ агитатӑрсемпе доверённӑйсем, участкӑри суйлав комиссийӗн членӗсем хӑйсен политикӑлӑ активлӑхне, пултарулӑхне ӳстерчӗҫ. Парторганизацин ӗҫри пултарулӑхӗ хӑпарчӗ, тӗреклӗнчӗ. Комсомолецсемпе сочувствуйушчисен тата партире тӑман активиссен парти ретне кӗрес туртӑм вӑйлӑланчӗ.

Отчотпа суйлав пухӑвӗ иртнӗренпе парти кандидатне 10 ҫын илнӗ, кандидатран члена 2 ҫын куҫарнӑ, сочувствуйушчине 1 ҫын илнӗ.

Парти ретне илнӗ йултăшсем пурте политикӑ тӗлӗшпе ӳсе ҫитӗннӗ, парти ӗҫне пӗтӗм чӗререн йуратса, хастарлӑн ӗҫлесе пыракансем. Вӗсем парткомпа парторганизацине ӗҫре хӗрӳлӗн пулӑшаҫҫӗ.

Парти ретне ҫӗнӗрен ҫак йултăшсене илнӗ:

Михайлӑв П. йулташ учителсен институтӗнче истори факультетӗнче II-мӗш курсра лайӑх вӗренет, комсомолец.

Ф. И. Иванов йулташ отличнӑ вӗренекен студент, комсомолец, пропагандис; Краснов А. йулташ тӑрӑшса лайӑх вӗренет, обществӑлӑ ӗҫе активлӑн хутшӑнать, хальхи вӑхӑтра пропагандис пулса ӗҫлет; М. Красновӑ йулташ, педрабфакра вӗренекен студенткӑ, педрабфакри комсомол комитечӗн членӗ.

Лiшко йулташ пединститутри преподавател, Верховнӑй Совет суйлавӗ вӑхӑтӗнче активлӑ ӗҫлекенсенчен пӗри, Шупашкарта тӗнчери лару-тӑру ҫинчен тата тӗне хирӗҫ ыйтусем тӑрӑх нумай хут докладсем туса панӑ; Васильйӗв Г. преподавател суйлав вӑхӑтӗнче доверённӑй пулса 15-мӗш участокра активлӑн, тӑрӑшса ӗҫлерӗ; Романӑвӑ преподавател суйлав вӑхӑтӗнче агитатӑр пулса ӗҫлерӗ.

Кунта асӑннӑ йултăшсем пекех шанчӑклӑ, парти ретне кӗме тивӗҫлӗ ҫынсем пирӗн татах та пур, вӗсем халӗ парти ретне кӗме хатӗрленеҫҫӗ.

Партком суйлав вӑхӑтӗнче агитатӑрсен ӗҫӗ ҫинчен отчотсем итлесе, вӗсене кирлӗ кӑтартусем панӑ, ӗҫре пулӑшнӑ. Суйлав вӑхӑтӗнче ӗҫленӗ агитатӑрсем хальхи вӑхӑтра йалсене—колхозсене салланнӑ.

Ҫапла ӗнтӗ партком хӑй ӗҫӗнче чылай ҫитӗнӳсем туни курӑнать. Анчах ҫитменлӗхсем те пур-ха. Парти ретне ҫӗнӗрен илнӗ йултăшсемпе, сочувствуйушчисемпе, партире тӑман активиссемпе, комсомолецсемпе ӗҫлессине темиҫе хут вӑйлатмала. Парти ретне кӗме тивӗҫлӗ комсомолецсемпе партире тӑман активиссене парти ретне кӗме лайӑхрах пулӑшмала.

Отчотпа суйлав пухӑвӗ хӑшпӗр студент-коммуниссем вӗренӳре йулса пынине палӑртса, малашне ку ҫитменлӗхе пӗтермелине хытӑ асӑрхаттарса хӑварчӗ. Партком ку тӗлӗшпе ӗҫлеме тытӑннӑ, анчах темиҫе хут тимлӗн ӗҫлемеле.

Институтра вӗренекен студентсем хушшинче ударниксемпе отличниксем ҫулран ҫул нумайланаҫҫӗ. 1936—1937 ҫ.ҫ. ударниксем 58 ҫын, отличниксем 13 ҫын кӑна пулнӑ пулсан, 1937—1938 вӗренӳ ҫулӗнче ударниксем—151 ҫынна, отличниксем 30 ҫынна ҫитнӗ.

Ударниксемпе отличниксенчен нумайӗшӗ комсомолецсем.

Вӗренӳре лайӑх ӗлкӗрсе пыракансемпе пӗрлех начар вӗренекенсем те пур-ха. Пединститутра вӗренекен студентсенчен 6,1 проц. вӗренӳре ӗлкӗрсе пыраймаҫҫӗ.

Кӑҫалхи екзамен вӑхӑтӗнче хӑшпӗр студентсем екзамена пымасӑр пӑрӑнса йулнисем те пулчӗҫ. Ку ӗнтӗ вӑл студентсем хушшинче ҫителӗксӗр ӗҫлени ҫинчен калать.

Институт дирекцийӗпе партокомӑн вӗренӳ пахалӑхне лайӑхлатассипе, 1938—1939 вӗренӳ ҫулӗнче студентсем илес тӗлӗшпе пысӑк организацилӗхпе ӗҫлемеле.

Отчотпа суйлав пухӑвӗ оборонӑ ӗҫне вӗренмели кружоксен ӗҫне темиҫе хут лайӑхлатса йама хушса хӑварнӑччӗ. Хальӗ епӗр ӑна пурнӑҫласа пыратпӑр. Институтра Осоавиахим членӗсем 568 ҫын. Вӗсенчен Ворошиловла тӗл перекенсем 222 ҫын; ПВХО значокӗсем—469 ҫын, ГСО значокӗсем—247 ҫын, ГТО значокӗсем—147 ҫын илнӗ.

Оборонӑ значокӗсем илнӗ ҫынсем 1095, вӗсенчен комсомолецсем 492 ҫын.

Преподавателсемпе служӑшчисем хушшинче Ворошиловла тӗл перекенсем 5 ҫын, ПВХО значокӗ илнисем—20 ҫын, ГСО—30 ҫын.

Коммуниссенчен Ворошиловла тӗл перекенсем 9 ҫын, ПВХО значокӗсем—16 ҫын, ГТО—9 ҫын, ГСО—12 ҫын илнӗ.

Отчотпа суйлав пухӑвӗ пулса иртнӗренпе пединститутри партком чылай ӗҫсем турӗ, малашне татах та пысӑк ҫитӗнӳсем тӑвассишӗн большевикла тимлӗн ӗҫлет.

Чӑвашсен пединститутӗнчи партком секретарӗ **Германӑв.**

Епӗ—парти членӗн кандидачӗ

Епӗ 1918 ҫ. ҫуралнӑ. Ман атте епӗ астӑвасса йаланах Шупашкарти типографинче ӗҫлекен рабочи, ҫавӑн пекех тӑвансем те типографинче ӗҫлеҫҫӗ. Епӗ хам та типографи ӗҫне йуратрӑм. 1932 ҫ. Шупашкарти типографине вӗренме кӗтӗм. 1932 ҫултанпа комсомол ретӗнче тӑратӑп.

Типографинче тӑрӑшса лайӑх вӗренсе пытӑм. Вӗренсе тухсанах ӗҫ нормине ытлашши тултарса пыма пуҫларӑм.

Районри типографинче квалификацилӗ наборщиксем ҫук пирки, 1936 ҫ. мана Шӑмӑршӑ райхаҫат редакцинче ӗҫлекенсем унти типографине килме чӗнчӗҫ. Халӗ ӗнтӗ унта наборщикре ӗҫлетӗп. Кашни уйӑхрах ӗҫ планне 200—250 проц. таран тултарса пыратӑп, ӗҫ укҫине те аван илетӗп.

Халӗ мана ПСК(б)Парти кандидатне илчӗҫ. Парти кандидатне илнӗшӗн пӗтӗм кӑмӑлпа савӑнатӑп. Ленин—Сталин партишӗн, Совет влаҫӗшӗн пӗтӗм хастарлӑхпа, ҫамрӑк вӑйа хурса ӗҫлеме сӑмах паратӑп. Парти кандидатне кӗнӗренпе хамӑн политикӑлӑ пӗлӳлӗхе ӳстерес тӗлӗшпе тата тимлӗн вӗренме пуҫларӑм. Халӗ ПСК(б)П истори кружокӗнче вӗренетӗп. Кулленхи ӗҫре йаланах А. Матвейӗвпа Ф. Севрӳгин коммуниссем пулӑшса, вӗрентсе пыраҫҫӗ.

Обществӑлӑ ӗҫе йаланах активлӑн хутшӑнса, вӑй ҫитнӗ таран лайӑх ӗҫлесе пыма тӑрӑшатӑп. РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсен суйлавӗ вӑхӑтӗнче типографинчи рабочисене суйлав саккунне вӗрентрӗм, участокри суйлав комиссийӗн членӗ пулса ӗҫлерӗм.

Халӗ епӗ 20 ҫулти ҫын. Кашни уйӑхрах 500 тенкӗшер ӗҫукҫи илетӗп. Ӗлӗк, патша вӑхӑтӗнче, пирӗн ҫамрӑксем—ӗҫҫыннисем ун ҫинчен шухӑшлама та пултарайман. Халӗ епӗ квалификацилӗ аслӑ наборщик.

Парторганизаци панӑ порученисене вӑхӑтра пурнӑҫласа пырассишӗн тата хамӑн политикӑлӑ пӗлӳлӗхе ӳстерсе, парти членне куҫма, пӗтӗм вӑйа хуратӑп.

Парти кандидачӗ **А. Атманӑв.**

Займ уполномоченнӑйӗсемпе ӗҫлемеҫҫӗ

ВӐРНАР (хамӑр корр.) Виҫҫӗмӗш Пилӗкҫуллӑх Займне районри чылай колхозсенче иртнӗ ҫулхи хисепрен иртерсе ҫырӑннӑ. Ман Йавӑш йалсоветӗнче займ уполномоченнӑйӗсене 13 ҫын уйӑрнӑ. Вӗсем хӑйсен участокӗсенче йединоличниксен хушшинче займ ҫинчен ӑнлантарнӑ. Йалсоветри халӑх ҫӗнӗ займа хавасланса ҫырӑнчӗ. Иртнӗ ҫулта йалсовечӗпе 10.640 тенкӗлӗх займ илнӗ пулсан, кӑҫал 11.670 тенкӗлӗх ҫырӑнчӗҫ. Займ сарас ӗҫре займ уполномоченнӑйӗсенчен Александр Сормӑв, Василий Уткин, Михаил Йазыкӑв тата 61 ҫулхи Спиридон Иванов йулташсем тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ.

Кольцовкӑри Сталин йачӗпе тӑракан колхозра иртнӗ ҫул 4 900 тенкӗлӗх займ илнӗ пулсан, кӑҫал 7 377 тенкӗлӗх, Зеленовкӑ колхозӗнче иртнӗ ҫул 4.700 тенкӗлӗх илнӗ пулсан, кӑҫал 5.510 тенкӗлӗх ҫырӑннӑ.

Уравӑш йалсоветӗнче иртнӗ ҫулта 7.525 тенкӗлӗх займ илнӗ. Кӑҫал займ уполномоченнӑйӗсем Михаил Александрӑв, Иван Федӑрӑв т. ыт. те кашни ҫыннах займ ҫинчен тӗплӗн ӑнлантарнипе 8.960 тенкӗлӗх займ ҫырӑнчӗҫ.

Анчах районра займ сарас ӗҫе пӗтӗмӗшпе илсен ҫителӗклӗ пулса пыни курӑнмасть-ха. Займ ҫырӑнтарас ӗҫпе ПСК(б)П райкомӗ, райӗҫтӑвком, районри финанс пайӗ тата перекет касси кирлӗ пек йертсе пыни ҫук. Вӗсем ҫак пысӑкран та пысӑк ӗҫ хӑй тӗллӗн пуласса шанса ларни курӑнать. Массӑлӑ-ӑнлантару ӗҫӗ ҫителӗксӗр, вырӑнсенче лайӑх ӗҫлеме пултаракан займ уполномоченнӑйӗсене уйӑрса ҫитермен. Уйӑрнӑ уполномоченнӑйсем чылайӗшӗ хут ҫинче ҫеҫ шутланса тӑраҫҫӗ.

Ийулӗн 1-мӗшӗнче Пӑвайалӗнчи „Большевик" колхоза займ ҫинчен ӑнлантарма райӗҫтӑвкомри ҫулйӗр пайӗн пуҫлӑхӗ Быстрицкий йулташ кайнӑ. Йала пырсан вӑл халӑха митинга пухӑнма хушнӑ та нимӗн тумасӑрах кайала тухса кайнӑ. Пӑвайалӗнче пайанхи куна 52 ҫын кӑна 435 тенкӗлӗх займ ҫырӑннӑ. Кунта халӗ те халӑха пӗрле пухса займ ҫинчен ӑнлантарман.

Малтиҫасри „Пӗрлешӳ" колхоза райҫугӗҫ пайӗнчи Майорӑв йулташ займ ҫинчен ӑнлантарма кайсан, ӑнлантарма май килмен... туй пулнӑ. Кун хыҫҫӑн вӑл йалсовета районри хатӗрлев кантурӗн директорӗ Бронӳхин йулташ кайнӑ пулнӑ. Вӑл та займ ҫинчен ӑнлантармасӑрах кайала таврӑннӑ. Ҫапла вара ку йалта ҫак тӑрана ҫитсе те займ ҫинчен тӗплӗн ӑнлантарман. Ҫапах колхозри 82 ҫын 1570 тенкӗлӗх займ ҫырӑннӑ. Уйрӑм хуҫалӑхсене йалтах манса хӑварнӑ, вӗсем хушшинче займ ҫинчен нимӗн те ӑнлантарман. Займ уполномоченнӑйӗсем Федӑр Александрӑв, Григорий Кондратйӗв тата йалсовет уполномоченнӑйӗ Борис Оҫипӑв нимӗн те ӗҫлемеҫҫӗ.

Иртеменкасси йалсоветӗнче йединоличник хуҫалӑхӗсем 88 шутланаҫҫӗ. Кунта пӗр йединоличнике те займ ҫырӑнтарман. Йалсовет председателӗ Григорий Куликов йаланах ӳсӗр ҫӳрет. Займ уполномоченнӑйӗ Ҫергейӗв, йалсовет секретарӗ Терекӑв, йалсовет уполномоченнӑйӗ Бакӑв йулташсем те займ сарас тӗлӗшпе ӗҫлемеҫҫӗ.

Елмен Сунарти Каганович йачӗпе тӑракан колхозра займ сарманпа пӗрех. Кунта банкӑн районри уйрӑмӗн управляйушчийӗ Кольцов й. пынӑ, вӑл займ ҫинчен ӑнлантармасӑрах кайала таврӑннӑ. Айкаш йалсоветӗнче те ҫавнашкалах. Колхоз председателӗ Новикӑв йулташ: „Займ сарасси ман ӗҫ мар, вӑл йалсовет ӗҫӗ",—тесе нимӗн те тумасть.

Малти Кӑкшӑм колхоз председателӗ Данилӑв йулташ хӑй те займ илме ҫырӑнман. Район займ сарас ӗҫре кӑҫал иртнӗ ҫулхинчен чылай кайа йулса пырать. Иртнӗ ҫулта ҫак вӑхӑта 512 пин тенкӗлӗх займ вырнаҫтарнӑ пулсан, кӑҫал ийулӗн 16-мӗшне пурӗ те 497 пин тенкӗлӗх кӑна сарнӑ.

В. Васильйӗв.

123.870 тенкӗлӗх ҫырӑнса илнӗ

КУСЛАВККА Комбинатри рабочисем, служӑшчисем тата инженерлӑ техникӑлӑ работниксем хушшинче Виҫҫӗмӗш Пилӗкҫуллӑхӑн Займне ҫырӑнса илесси анлӑн сарӑлса кайрӗ.

Ийулӗн 15-мӗшне комбиначӗпе 964 ҫын 123 пин те 870 тенкӗлӗх займ ҫырӑнса илчӗҫ. Йӑвӑҫ каскалакан цехра 178 рабочи 23110 тенкӗлӗх, ҫуртйӗр хатӗрӗсем тӑвакан цехра 117 рабочи 11600 тенкӗлӗх, йӑвӑҫ ҫуракан цехра 106 рабочи 11305 тенкӗлӗх займ ҫырӑнса илнӗ. Ку цехсенче пӗр рабочи йулмиччен ҫӗнӗ займ ҫырӑннӑ.

Рабочисем займ сарас ӗҫре пӗр-пӗринпе социалисӑмлӑ ӑмӑртӑва тухаҫҫӗ. Вӗсем хӑйсен сӗнӗвӗсенче пурте пекех пӗр уйӑхри ӗҫукҫилӗх займ илме чӗнеҫҫӗ. Нумайӗш рабочи-стахановецсем займа уйӑхри ӗҫукҫилӗх ҫырӑнса илнӗ. Ҫуртйӗр хатӗрӗсем тӑвакан цехра С. Миронӑвӑ, А. Гнусарӑв, Комаров, Никифӑрӑв йулташсем, йӑвӑҫ каскалакан цехра А Фирсӑвӑ, А. Нагибин, А. Мотковӑ йулташсем, йӑвӑҫ ҫуракан цехра Филиппӑвӑ, Фадейӗвӑ, Белоуссӑвӑ йулташсен кашнийӗх пӗр уйӑхри ӗҫукҫилӗх ҫырӑнчӗҫ.

М. Корнилӑв.

Итали салтакӗн дневникӗнчен

Африкӑна тухса кайни

Казармӑра пурте, тепӗр темиҫе кунран, нумай-нумай тепӗр икӗ уйӑхран епӗр Африкӑна тухса кайассине пӗлсе тӑнӑ. Запасран ҫар службине илнӗ офицерсем пӗрмайах казармӑна килеҫҫӗ. Ҫу кунӗсем ҫитрӗҫ, питӗ шӑрӑх. Ҫула казармӑра пурнӑҫ уйрӑмах питӗ йӑвӑр. Малашне мӗн пулассине пӗлмесӗр пурӑннӑ чухне пушшех те йӑвӑр. Кайатпӑр-и? Ӑҫта? Кӗтиччен, кайсан лайӑхрах.

Йулашкинчен, августӑн 24-мӗшӗнче, казармӑ килкартинче Хӗвелтухӑҫ Африкӑна мобилизацилесе илсе кайасси ҫинчен кӑларнӑ приказа вуласа пачӗҫ. Ку вӑл вӑрҫӑ пуҫланнине пӗлтерчӗ. Тата тепӗр икӗ ерне хушши йӑвӑр кунсене пурӑнса иртермеле. Ҫав кунсенче пирӗн казармӑра хӑнкӑласем тата ытларах нумайланчӗҫ пек туйӑнать. Епӗр хӑнкӑласене купи-купипе вӗлеретпӗр, мӗншӗн тесен вӑхӑта урӑхла нимӗнле те иртерме ҫук...

Пире, сентйабӗрӗн 13 мӗшӗнче Ливине илсе кайатпӑр тесе, Бенгазине антарчӗҫ. Анчах та, Натальран пире Абиҫҫинине йачӗҫ. Декабӗрӗн 25 мӗшӗнче пире „Калабрия" йатлӑ пӑрахут ҫине тийерӗҫ. Тийессе пӗтӗм дивизине мар, 4 пин ҫынна ҫеҫ тийерӗҫ. Фронта накавани пама тивӗҫлӗ ҫынсене ҫеҫ йачӗҫ. Епӗ те вӗсен шутӗнче пултӑм. Епӗ нихҫан та фашисӑм режимӗпе хам килӗшменнине пытӗрман. Батальон командир пире: „епӗ сирӗн хушӑра усал сурӑхсене шыраса тупатӑп, вӗсене сӑнчӑрласа хӗвел ҫине кӑларса тӑрататӑп", тесе хӑратать. Фашисӑм режимӗпе килӗшменнисем нумай пулнӑ, вӗсене пурне те тӗрмене хупса пӗтерме май ҫук. Ҫавӑнпа та, тӗрмене хупас вырӑнне, Натале ҫитсенех пирӗн хушӑран 4 пин ҫын уйӑрса илсе, фронта йамала турӗҫ. Пире полицейскисем пӑшалсене пирӗн ҫине тӗллесе ӑсатса йачӗҫ, пӗр сӑмахпа каласан, епӗр арӗслене ҫынсем пулнӑ. Арестантсем те хирӗҫ тӑма пултараҫҫӗ. Протестлеме формине ҫеҫ шыраса тупни кирлӗ. Епӗ ӑна тупрӑм. Епӗ хамӑн шлйом ҫине: „Ман пек шухӑшлакансем сывӑ пулччӑр" тесе ҫыртӑм та шлйома пуҫа тӑхӑнтӑм.

Шлйомсем ҫине ҫапла ҫырнисем часах нумайланчӗҫ. Питӗ хӑйулӑ ҫырнисем: „Тӗп пултӑр вӑрҫӑ!"

„Ҫартан кайасси сывӑ пултӑр!" тесе ҫырнӑ. Ҫапла кӑтартрӗ хӑйӗн шухӑшне 42-мӗш полк.

Йанварӗн 2-мӗшӗнче (1936 ҫулта) пире Массауерта пӑрахут ҫинчен антарчӗҫ. Нимӗн те тӑхтамарӗҫ, пире грузовиксем ҫине лартса Ади Квалана илсе кайрӗҫ.

Начальниксем епӗр питӗ ҫирӗп шухӑшлӑ пуласса кӗтнӗ. Анчах пире ҫитерекен апата ҫыснӑйӑ та паман. Епӗр час-часах кунӗпех нимӗн ҫимесӗр пурӑннӑ.

Епӗр офицерсене ылханатпӑр. Анчах офицерсем хӑйсене тивесрен хӑраса никама та наказани параймарӗҫ.

Гондар ҫине тапӑнни

Февралӗн 10-мӗшӗнче фронтӑн малти линине кайма приказ килчӗ. Епӗр Ади Кваларан тухса кайрӑмӑр, ҫул ҫинче 4 кун хушши пулнӑ хыҫҫӑн, Мареб йуханшывӗ патне ҫитрӗмӗр. Пирӗн Ишра расӑн ҫарӗсене хирӗҫ малти линине тухмала пулнӑ.

Пирӗн умра пысӑк тусем курӑнаҫҫӗ. Епӗ ҫакӑн пек ҫӳлӗ тусене нихҫан та курман. Пирӗн ҫав тусем ҫине хӑпармала. Ывӑннӑ пирки ӳкекенсене пӑшалӗсене туртса илеҫҫӗ те, хӑйсене выҫса вилме пӑрахса хӑвараҫҫӗ. Приказсем ҫапла пулнӑ.

Февралӗн 18-мӗшӗнче епӗр нимӗн апатсӑр тӑрса йултӑмӑр. Сиере ҫитиччен епӗр пилӗк кун хушши ту урлӑ каҫрӑмӑр. Ҫак вӑхӑтра пире апат-ҫимӗҫ памарӗҫ. Февралӗн 29-мӗш кунне епӗ лайӑх астӑватӑп, мӗншӗн тесен ку кун епӗр апат ҫирӗмӗр. Епӗр ҫул ҫинче темиҫе вылйӑх тӗл пултӑмӑр, приказ пуласса кӗтмесӗрех вӗсене вӗлертӗмӗр те, пӗҫерместӗрех ҫирӗмӗр.

Мартӑн 2 мӗшӗнче ҫеҫ епӗр йӗркеле апатлантӑмӑр. Епӗр Селаклуна ҫитрӗмӗр, кунта епӗр ҫитиччен темиҫе кун малтан ҫеҫ 2 мӗш ҫар корпусӗ Абиҫҫини ҫарӗсемпе хыта ҫапӑҫнӑ. Ҫапӑҫу пулнӑ вырӑнта абиҫҫинецсем 10.000, италйанецсем 1200 ҫын вилсе йулнӑ.

Мартӑн 25-мӗшӗнче Амба Арадам районӗнче абиҫҫинецсем 2-мӗш полкри салтака вӗлернӗ пулнӑ. Капитан ҫакӑншӑн абиҫҫинецсене тавӑрасшӑн пулнӑ, вӑл кӳршӗри икӗ йала ҫавӑрса илме приказ пачӗ. Ҫав йалсенче хӗрарӑмсемпе ачасем ҫеҫ йулнӑ пулин те, пулеметрен пеме хушрӗ. Икӗ сехетрен саваторин отрйадне ҫав йалсенчи вилӗсене пӗр ҫӗре купаласа ҫунтарма приказ панӑ, мӗншӗн тесен вӗсене пытармалли пулман. Епӗр ҫак тискерлӗхе курсан, пирӗн хушӑри йулташсен нумайӗшӗн куҫҫулӗсем йухса анчӗҫ. Капитан салтаксенчен пӗрин куҫӗ ҫинче куҫҫуль курсан, ӑна питрен хытӑ ҫапрӗ, револьверпе тӗллесе ҫапла кӑшкӑрчӗ:

— Кунтӑ сэнӑн йулташусем пулман пулсан, епӗ сана негра персе пӑрахнӑ пекех, пӗрсе вӗлереттӗм.

Виҫӗ кун иртсен палаткӑра капитана виллӗн тупрӗҫ.

„Триба"

Кун хыҫҫӑн, Ман Каннеттӑра лагӗре вырнаҫма приказ килчӗ. Халӗ ӗнтӗ вӑрҫӑ пӗтрӗ тесе те калама май пур. Пире киркасем валеҫсе пачӗҫ.

— Каторгӑ ӗҫӗ,—тесе каларӑмӑр епӗр.

Епӗр пӗрин хыҫҫӑн тепри хамӑра киле йама ыйта пуҫларӑмӑр. Епӗр ирӗксӗр ӗҫленӗ, мӗншӗн тесен пире Абиҫҫинире ӗҫлеттерессишӗн тытнине пӗлнӗ. Салтаксене ӗҫлеттерни рабочисенчен те йӳнелӗ ларать.

Пӗрре епӗр саботаж тума килӗшрӗмӗр. Епӗр орудисене, ӗҫхатӗрӗсене ҫӗмӗрме тытӑнтӑмӑр. Офицерсем айӑплӑ ҫынсене шыраса тупса, вӗсене тӗрмене хупрӗҫ. Анчах тӗрмере лайӑхрахчӗ, мӗншӗн тесен унта йӑвӑр ӗҫ туса ҫӗмӗрӗлсе пӗтместӗн. Ҫакна офицерсем сисрӗҫ, салтаксене тӗрме хӑратманнине туйрӗҫ, вара айӑплисенчен укҫан штраф илмеле турӗҫ. Епӗр кун хыҫҫӑн тата чейелентӗмӗр, сӑмахран, ҫӑмӑр ҫунӑ чухне цемента нимӗн витмесӗр хӑваратпӑр.

Тӗрлӗ ыйтусене сӳтсе йавма епӗр часах пуҫтарӑннӑ. Епӗр дискусилӗ кружок турӑмӑр, вӑл „Триба" йатлӑччӗ. Кружокра тӑракансенчен хӑшне-пӗрне офицерсем тытрӗҫ, вӗсене ҫар трибуналӗ вӑрӑсем тесе суд турӗ. Мана та тӗрмере пулма лекрӗ. Мана икӗ уйӑх тӗрмене хупмала, икӗ сехет хушши йӑвӑҫ ҫумне ҫыхса хӗвелре тӑратмала суд турӗҫ.

Тӗрмерен тухнӑ хыҫҫӑн, епӗр хамӑрӑн задачӑсем мӗнле пулнине лайӑх пӗлтӗмӗр, ӑнлантӑмӑр. Ҫапла пуҫланса карӗ „Триба" йатлӑ организаци. Ҫав организаци тӗрлӗ ыйтусене ӑнлантарса парать. Вӑрҫӑ пӗтнӗ. Епӗр киле кайасшӑн. Ҫаксем пулнӑ „Триба" лозунгӗсем.

Фашисла „Пополо д-Италия" хаҫатри пур статйасене те питӗ хытӑ критиклетпӗр. „Триба" кашни кунах салтаксем хушшинче ӗҫлет. Пурте вӑрҫӑ капиталиссене ҫеҫ усӑ паннине ӑнланса илчӗҫ.

„Триба" ӗҫӗ усӑ пама пуҫларӗ. Икӗ уйӑх иртсен, генерал Сичилйани пирӗн дивизине киле йарасси ҫинчен аслӑ командовани умне ыйту лартрӗ. Тата тепӗр икӗ уйӑхран „Триба" ыйтуне ҫар командовани ирӗксӗрех пурнӑҫа кертрӗ, пирӗн дивизине киле йарасси ҫинчен приказ пачӗ.

Тӑван ҫӗршыва таврӑнни

Августӑн 30-мӗшӗнче пире ирхине 2 сехетрех вӑратрӗҫ. Ҫапла пуҫланса карӗ епӗр киле таврӑнасси.

Епӗр хамӑр ирӗксӗр вӑрҫӑсенче пулнӑшӑн тарӑхрӑмӑр.

— Чухӑн негрсем,—тесе калаҫҫӗ хӑшӗсем. Епӗр пирӗн йенче вӑрҫӑ хатӗрӗсем нумай пулнине пӗлнӗ. Итали самолйочӗсем негрсем ҫине темӗн чухлӗ бомбӑсем пӑрахнӑ. Вилӗ ҫынсем пишерӗн шутланнӑ. Ҫапла ӗнтӗ „цивилизаци".

Канна вӑхӑтра епӗ пысӑк чул ҫине „Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!" тесе ҫыртӑм.

Ыран тухса кайас тенӗ чухне епӗр ҫывӑраймарӑмӑр. Салтаксем калаҫаҫҫӗ. Пӗр ҫӳлӗ йулташ таса сӑмах каларӗ:

— Йулташсем, епӗр пӗр-пӗрне йывӑр минутсенче пӗлтӗмӗр, епӗр ирӗклӗ халӑха хирӗҫ ҫапӑҫрӑмӑр, ӑна чура турӑмӑр. Пайантан пуҫласа пирӗн прав семпе ирӗксене туртса илнисене хирӗҫ ҫапӑҫмала. Епӗр хамӑра киле йамала турӑмӑр, есӗр ӑна кураттӑр. Пӗрлешӳре вӑй. Ҫакна асра тытӑр.

Епӗр Генуйа ҫитсен музыкӑ „Джовинеци" йурларӗ, фашисла ҫамрӑксен гимнине йурларӗ. Пирӗн ҫине чечексем пӑрахрӗҫ. Анчах халӑх хушшинче епӗр пӗр рабочийе те, Итали халӑхӗн чӑн-чӑн ывӑлне курай марӑмӑр.

Епӗр Гекушерен Астине тухса кайрӑмӑр Унта та пире „савӑнӑҫлӑ", Муссолини сӑнӗсемпе кӗтсе илчӗҫ. Пире хула тӑрӑх илсе карӗҫ. Анчах епӗр хамӑра саламлакансене питӗ хытӑ тарӑхнӑ.

— Пирӗн ҫурӑмсем ҫине пӑхсанччӗ, унта пыйтӑ тулли вӗт,—теҫҫӗ йулташсем.

Казармӑра пире вальли улӑм сарса хунӑ. Октйабӗрӗн 10-мӗшӗнче пире ирӗке кӑларасси ҫинчен приказ килчӗ. Епӗ киле кайрӑм.

Мана хамӑн ватӑ анне ыталаса илчӗ. Вӑл куҫҫуль йухтарса, макӑрать, епӗ те хамӑн куҫҫульне чарайманрӑм.

— Мӗн пулнӑ сире?—тесе ыйтрӑм епӗ.

— Епӗ халӗ есӗ килнӗшӗн савӑнса макӑратӑп, епӗ нушашӑн та, хамӑра нимӗн ӗҫсӗр тӑратса хӑварнӑшӑн макӑратӑп. Мӗнле пурӑнас?

Урана тӑхӑнмали те, ҫийе тӑхӑнмали те, ҫимели те—нимӗн те ҫук. Манӑн ҫемйе ҫӗрӗн-кунӗн ӗҫленӗ пулин те, унӑн нимӗн те ҫук.

Акӑ сире епӗ кайса килни, вӑрҫӑ ҫинчен, вӑрҫӑ пӗтнӗ хыҫҫӑн мӗн кӗтни ҫинчен каласа панӑ чӑнлӑх.

Епӗ Африкӑри ҫарсенчи пур салтаксене те фашиссене хирӗҫ пӗрлешме, Испанецсем пек фашисӑма хирӗҫ кӗрешме чӗнетӗп.

(Ҫакна ҫыракан салтак темиҫе ҫул хушши ӗҫсӗр антраса пурӑннӑ пирки, Абиҫҫини вӑрҫине хӑй ирӗкӗпе кайнӑ пулнӑ).

Производствӑри куљтурлӑхшӑн

КУСЛАВККА. Иртнӗ вӑхӑтсенче комбинатри каскалакан цехра тӗрлӗрен материалсем, çӳп-çапсем, детаљсем йӗркесӗр сапаланса выртнине курма пулнӑ. Цех начаљникӗ пулса Павлӑв йулташ ӗçлеме пуçласан вӑл чӑн малтанах цехра куљтурӑлӑх тӑвассишӗн тӑрӑшма тытӑнчӗ. Малтанах ӗç вырӑнӗсене тасатрӗ, унтан цеха йӗркене кӗртрӗ. Халӗ цехра детаљсем сапаланса выртмаççӗ, çӳп-çапсене те тасатсах тӑраççӗ. Ку тӗлӗшпе цехра йатарласа уйӑрнӑ бригадӑ ӗçлет.

Анчах та тасалӑхшӑн, çирӗп йӗрке тӑвассишӗн пур цехсем те тивӗçлӗн ӗçлени курӑнмасӑ. Акӑ хӑма çуракан цехра час-часах турпассем, йӑвӑç таткисем купаланса выртаççӗ, тепӗр чухне иртсе çӳреме те майӗ çук. Цех ӑшӗ те таса мар, тусанлӑ. Стољарнӑй цехра та мачча́сем, чӳречесем тусанланса, хуралса ларнӑ. Станоксене вӑхӑтра тасатмаççӗ.

Ӗç вырӑнне куљтурӑлӑ организацилени плана тултарса пыма кирлӗ условисенчен пӗриййӗ пулаӑ. Комбинат руководителӗсен пур цехсенче те каскалакан цехри пек тасалӑх тӑвас пулаӑ.

А. Мошков.

Ӑмӑртӑва хутшӑнманнисем çук

Шупашкарти Водопйанӑв йачӗпе тӑракан тир-сӑран савӑтӗнчи комсомолӗцсем Ленинла-Сталинла комсомол 20 çул тултарнине çӗнӗ çитӗнӳсем тунипе кӗтсе илессишӗн кӗрешеççӗ. Вӗсем чаплӑ подаркӑсем хатӗрлеççӗ.

Комсомолӗцсем производствӑри çитменлӗхсене пӗтерсе, кулленхи плана ытлашшипех тултарса пыма, ӗç тухӑçлӑхне хӑпартма, тавар пахалӑхне лайӑхлатма, брак кӑларассине пачах пӗтерме пулнипе пӗрлех, хӑйсен политикӑла-техникла пӗлӗвне куллен ӳстерсе пыма пулаççӗ.

Кирӑв йачӗпе тӑракан бригадӑ (бригадирӗ С. Куçмин йулташ) кашни кун хӑй бригадипе 160—180 мӑшӑр туфли туса кӑларассишӗн тӑрӑшаӑ. Çелекен бригадӑ (бригадирӗ П. Скачкова йулташ) çмӗнӑра 160 мӑшӑр туфли тата 240 мӑшӑр чувйак çӗлесе кӑларма (нормӑ тӑрӑх бригадӑн 140 мӑшӑр туфли çӗлемеле), брак кӑларассине пачах пӗтерме, ӗç тухӑçлӑхне ӳстерсе пыма пулса социалисӑмлӑ ӑмӑртӑва тухрӗ.

Ленинла-Сталинла комсомол 20 çул тултарнине ӳсӗмсемпе кӗтсе илессишӗн пыракан социалисӑмла ӑмӑртӑва савӑтри пур бригадӑсем те, комсомолӗцсем те хутшӑннӑ.

И. Федӑрӑв.

Ийунӗн 12-мӗшӗнче 5-мӗш номӗрлӗ ачасен çуртӗнче (Обнинский станцийӗ, Кийӗв чукун çулӗ) вӗренӳ çулне пӗтернӗ тата Испани ачисем ССР Сойузне килни çулталӑк тултарнӑ йатпа паттӑр Испани халӑхӗн ачисем ваљљи уйав туса ирттернӗ.

ӲКЕРЧӖК ÇИНЧЕ: Испани ачисен пӗр ушкӑнӗ вӑйӑра.

А. Грибовский фото-ӳкерчӗкӗ (Сойузфото) „Прессклише".

Çӑмӑл атлетикӑ ӑмӑртӑвӗ

Ийулӗн 15—16-мӗшӗсенче Шупашкарти 5 спорт обшчӗствин çӑмӑл атлетикӗсен хулари малти вырӑна тухассишӗн ӑмӑрту пулса иртрӗ. Ӑмӑртӑва çӑмӑл атлетиксем 78 çын хутшӑннӑ. Ӑмӑртура „Спартак" обшчӗствин команди 109,5 очко илсе пӗрремӗш вырӑна, иккӗмӗш вырӑна „Динамо" команди (163 очко), виççӗмӗш вырӑна „Темп" команди (190,5 очко) 4-мӗш вырӑна „Буревестник" (295 очко) йулашки вырӑна „Молния" команди (301,5 очко) йышӑннӑ.

Спартаковӗц Журављов 100 метр дистанцине 11,9 çекундра чупса тухса, 1-ш вырӑн йышӑннӑ. Ф. Андрейӗвпа Кузнецов (иккӗшӗ те „Динамо" обшчӗствинчен) 12,1 секундра чупса тухнӑ. 1500 метр дистанцине Бурашникӑв („Спартак") 4 минут та 27,2 секундра, Степанӑв(„Спартак") 4 минут та 36,2 секундра, Кузнецов („Динамо") 4 минут та 53,2 секундра чупса тухнӑ. 5000 метр дистанцине Бурашникӑв 16 минут та 49,2 секундра чупса тухса, республикӑри рекордран иртсе кайнӑ. Майорӑв („Спартак") 17 минут та 4,4 секундра, Тимофейӗв („Молния") 19 минут та 26 секундра чупса тухнӑ.

Чупса пырса виçӗ хутчен сиксе инçе сиксе йенӗпе Платунов („Темп") 12 метр сикнӗ, 1-мӗш вырӑна тухнӑ, Андрейӗв („Динамо") 11 метр та 64 сантиметр сиксе иккӗмӗш вырӑна, Блудов („Молния") 11 метр та 37 сантиметр сиксе 3-ш вырӑна тухнӑ.

Чупса пырса çӳле сиксе йенӗпе пӗрремӗшпе иккӗмӗш вырӑна Платуновпа Громӑв („Спартак") уйӑрнӑ. виççӗмӗш вырӑна динамовец Шеметило йышӑннӑ. Чупса пырса инçе сикессипе Çтепанӑв 1-мӗш вырӑна (5,53 метр), иккӗмӗш вырӑна Андрейӗв (5,50 метр) йышӑннӑ.

Сторожев („Спартак") гранат 57,22 метр ывӑтнӑ, Андрейӗв („Динамо") 54,46 метр.

Хӗрарӑмсенчен Гушчинӑ („Спартак") 100 метра 13,8 секундра чупса тухса, Чӑваш республикинчи рекордран иртсе кайнӑ. Вӑлах 500 метр дистанцине 1 минут та 26,9 секундра, 800 метра 2 минут та 34,2 секундра чупса тухнӑ. Гушчинӑ 4,56 метр тӑршшӗ, 1,25 метр çӳлӗш, Йарославцӗвӑ („Темп") 1,20 çӳлӗш сикнӗ. Йадро ывӑтассипе Агейӗвӑ („Спартак") 7,15 метр ывӑтнӑ, темповӗц Угловскайа 22,19 метра диск пенӗ. Гушчинӑ („Спартак") граната 35,82 метр ывӑтнӑ, Шмоникӑвӑ („Динамо") диска 20,52 метр пенӗ.

Футбол хыпарӗсем

● Ийулӗн 18-мӗшӗнче „Темп" стадионӗнче Чикме хулинчи футбол командипе Шупашкарти „Правда" обшчӗствин команди футболла выљарӗç. Вӑйа икӗ командишӗн те пӗр пек 2:2 шутпа пӗтрӗ.

● Çак кунах „Спартак" стадионӗнче спартаковӗцсем „Учитель" обшчӗствин сборнӑй командипе выљарӗç. Вӑйа „Спартак" команди çӗнтернипе пӗтрӗ.

● Ийулӗн 19-мӗшӗнче Астраханљри „Медик" спорт обшчӗствин футбол команди килчӗ. Пайан „Темп" обшчӗствин стадионӗнче, хӑнасем „Спартак" командипе тӗл пулса выљаççӗ.

Испани халӑхӗн паттӑр кӗрешӗвӗ пуçланни икӗ çул тултарчӗ

Ийулӗн 18-мӗшӗнче Валенсире Левант фронтӗнче çапӑçакан республикӑ çарӗн представителӗсене чаплӑн чысланӑ. Оратӑрсен сӑмахӗсенче халӑх мӗн çӗнтериччене тӑшманпа çапӑçма хатӗр тӑни йанӑранӑ.

Валенсире тухса тӑракан хаçатсем Испанири коммунисла партин тӗп комитечӗ Левант фронтӗнче çапӑçакан республикӑ çарне чӗнсе калани пичетленӗ. Пайан хирӗç тӑни вӑл—ыранхи çӗнтерӗвӗн никӗсӗ,—тенӗ çав чӗнсе каланин е. Испани халӑхӗ патне çырнӑ уçӑ çырӑвӗнче республикӑ боецӗсем халӑха çакӑн çинчен шантараççӗ. Çавӑн пек хирӗç тӑрасси вӑйсӑрланмӗ, вӑл татах та вӑйланса пырӗ,—теççӗ.

* * *

Испанин тӗп пайӗнче республикӑ çарӗсен генераљнӑй комиссарӗ Ернандес Испани халӑхне тата боецсене—пӑлхавçӑсемпе интервентсене хирӗç çапӑçма пуçлани икӗ çул тулнӑ йатпа сӑмах каланӑ Фашиссем пур майсемпе те Валенсине тытса илесшӗн çуннине кӑтартса, Ернандес: Валенси халӑхӗ ун пек тума парас çук, тесе каланӑ. „Тӑшман территорийе тытса илме пултарчӗ, анчах вӑл халӑхӑн çӗнтерес ирӗкне çӗнтерме пултарайманӗ. Тӑшман туртса илнӗ хуласемпе йалсенче тӑшман пушӑ вырӑн çеç тупрӗ, мӗншӗн тесен вӗсенче пурӑннӑ çынсем фашиссемпе пӗрле пурӑнасшӑн мар пулса хӑйсен килӗсене пӑрахса кайма кӑмӑл тунӑ. Малтанхи вӑхӑтсенче тӑшман хуласене çӑмӑллӑнах çӗнтерсе илнӗ. Анчах халӗ кашни утӑм ӑна пысӑк çухатусем кӳрет. Çар, халӑх тата правительствӑ—пӗрлӗхлӗ. Вӗсем Испани халӑхӗ никама пӑхӑнмасӑр пурӑнассишӗн, çӗршывӑн малашнехи лайӑх пурнӑçӗшӗн кӗрешеççӗ. Çавӑнпа та тӑшмана хирӗç пурин те тӑрас пулаӑ, хирӗç тӑни çӗнтерӳ патне илсе çитерет".

* * *

Ийулӗн 17-мӗшӗнче Францири коммунисла партин çекретариачӗ Испанири коммунисла партин генераљнӑй çекретарӗ патне телеграммӑ йанӑ. Францири коммунисла парти,—тенӗ телеграммӑра,—ирӗклӗхе чаплӑн хӳтлекенсене, демократине, пӗтӗм тӗнчери мире сӑласшӑн Испанири фронтсенче хӑйсен пурнӑçне паракансене пурне те саламлаӑ. Испани халӑхне пӗтӗм тӗнчери фашисӑма çӗнтерме пулӑшасшӑн тӑрӑшса, Францири коммунисла парти Франци ӗççыннисене, вӗсене Испани халӑхӗпе пӗрлештерекен çыхӑнусене вӑйлатма чӗнет тата республикӑлӑ Испани чиккисене уçас тӗлӗшпе пӗтӗм вӑйсене хума пулаӑ. (ТАСС).

Испанири фронтсенче

Левант фрончӗн хӗвеланӑç районӗнче 50 ытла танк тата нумай самољотсем пулӑшнипе Итали çарӗсем ийулӗн 16-мӗшӗнче Барракас патнелле малалла куçнӑ. (Барракас—Теруелпе Сагунто хушшинчи чукунçул çинче). Хайар çапӑçусем хыççӑн, Итали çарӗсем Барракасран çурçӗр-хӗвелтухӑç йенче 2 йал туртса илнӗ. Фронтӑн çак участокӗнче пӗр Итали çарӗсем кӑна çапӑçаççӗ. Интервентсем туртса илнӗ Саррионра Итали флагӗ тӑратса лартнӑ.

Фашиссем Саррион-Барракас йенелле куçса пынипе, Мора де-Рубиелоса сыхлакан республикӑ чаçӗсемшӗн йывӑр положени пулса тӑнӑ. Нумайччен çине тӑрса çапӑçнӑ хыççӑн кунта республиканӗцсем хӑйсен позицийӗсенчен куçнӑ.

Республикӑ авиацийӗ пӑлхавçӑсемпе интервентсен çарӗсем пӗр çӗре пухӑна-пухӑна тӑнӑ вырӑнсем çине чылай хут пырса бомбӑсем пӑрахнӑ, вӗсене чылай сийен кӳнӗ.

Ытти фронтсенче улшӑнусем çук.

* * *

Ийулӗн 17-мӗшӗнче Итали пилӗк бомбардировшчикӗ Аликанте (Вӑтаçӗр тинӗсӗ хӗрринчи порт) çине вӗçсе пырса бомбӑсем пӑрахнӑ. Самољотсем бомбӑсене пулӑссем пурӑнакан квартӑлсем çине пӑрахнӑ. Пулӑçсен темиçе пӳртне çӗмӗрнӗ. Хыçса кайнӑ пушара часах сӳнтернӗ. Тӑтах бомбӑсем пӑрахма вӗсене республикӑ самољочӗсем чӑрмантарнӑ. (ТАСС).

Н. М. Шверник йулташа Ленин орденӗ панӑ

Пӗтӗм Сойузри Профсойузсен Тӗп Совечӗн пӗрремӗш çекретарӗ Николай Михайлӑвич Шверник йулташ 50 çул тултарнӑ май, тата вӑл рабочи класшӑн тӑрӑшса тата тивӗçлӗ ӗçсем тунине шута илсе, ССР Сойузӗн Верховнӑй Совет Президиумӗ Н. М. Шверник йулташа Ленин орденӗ пама постановлени йышӑннӑ.

(ТАСС).

Ачасем учебниксем кӗтеççӗ

Молӑтӑв йулташ аслӑ шкул работникӗсен Пӗтӗм Сойузри канашлӑвӗнче каланӑ: „Шкулсен ытти çитменлӗхӗсемпе пӗрлех чи малти ретре тӑраканни вӑл—лайӑх учебниксем çителӗксӗрри". Ку сӑмахсем аслӑ шкулсене çеç мар, вӑтам шкулсемпе пуçламӗш шкулсене те тивеççӗ. Халӗ пирӗн республикӑра шкулсем ваљљи программӑсем тӑвас, учебниксем кӑларас ӗç питӗ кайа йулса пыраӑ.

Чӑваш АССР Çутӗç Халӑх Комиссариачӗ чӑваш чӗлхин (литературине мар!) программине ийулӗн 20-мӗшӗччен аран-аран пӑхса тухса çирӗплетнӗ. Анчах вӑл программӑ халӗ Çутӗç комиссариачӗн çуртӗнчен тулала тухайман, ӑна кун та пичетлемесӗр вырттараççӗ.

Туллимар вӑтам тата вӑтам шкулсенче литературӑ вӗрентмелли программӑна халӗ те туман. Çавӑнпа та чӑваш литературин учебникне программӑна пӑхмасӑр çырса, пичете панӑ. Программӑсӑр çырнӑ учебник ӑçтан çирӗп учебник пултӑр ӗнтӗ?

Вӑхӑт кӗтмест. Тепӗр уйӑх та вунӑ кунтан вӗренӳ çулӗ пуçланаӑ. Çутӗç Халӑх Комиссариачӗ кӑçал 46 тӗрлӗ учебник кӑларма палӑртнӑ пулсан, вӗсене çентябӗрӗн 1-мӗшӗ тӗлне мӗнле те пулин ӗлкӗртмелех. Анчах халӗ кӗнеке магазинӗсене çӗнӗ вӗренӳ çулӗ ваљљи пӗр учебник те тухман. Хӑшпӗр учебниксене („Диктантсен сборникӗ" т. ыт. те) халӗ те çырма тытӑнман, чӑваш грамматикин учебникӗсем („Хӑнӑхтару ӗçӗсен сборникӗн" 1 мӗш пайӗсӗр пусне) авторсен аллинчех выртаççӗ.

Кунта ӗçе вӑраха йама çук. Программӑсемпе учебниксене тӗплӗн туса, хӑвӑртрах шкулсем патне çитермеле.

Георгий Ш.

Халӑх переписçне хатӗрленеççӗ

ВӐРНАР (хамӑр корр.). Районри халӑх хуçалӑхне шута илес тӗлӗшпе ӗçлекен тытӑмра Пӗтӗм Сойузри халӑх переписçне хатӗрленеççӗ Халӗ районра пурӑнакан халӑхсен спискине çырса хатӗрленӗ. Районри участкӑсенчи, йалсоветсенчи схемӑлӑ карттӑсене туса пӗтернӗ. Переписçре ӗçлеме РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсен суйлавӗсенче тата 1937 çулхи переписçре активлӑн хутшӑнса ӗçленӗ 628 çынна уйӑрса хунӑ. Ийулӗн 8 мӗшпе ийулӗн 15-мӗшӗ хушшинче йалсоветсенчи хуçалӑх кӗнекисене тӗрӗслесе тухнӑ. Учреждениссемпе предприйатисен спискине кашнине уйрӑмӑн çырса хатӗрленӗ. Халӑх переписçне хатӗрленес ӗçре участкӑри инспекторсем 4 çын пурте тӑрӑшса ӗçлеççӗ. Вӗсене районри халӑх хуçалӑхне шута илес тӗлӗшпе ӗçлекен тытӑм инспекторӗ Петр Наумӑв йалӑнах пулӑшса, кӑтартусем параӑ.

В. Васҫилйӗв.

КӖСКЕН

◆◆ „Сказка о рыбаке и рыбке". Шӑхасан районӗнчи колхозсенче „Сказка о рыбаке и рыбке" йатлӑ сасӑлӑ тӗрлӗ краскӑ емпе ӳкернӗ кинокартинӑна кӑтартма пуçларӗç. Ийулӗн 15-мӗшӗнче Атнашри колхоз клубӗнче ку картинӑна 200 ытла колхозник курчӗç.

◆◆ 5.400 тенкӗлӗх çырӑнчӗç. Шӗкӗр йалсоветне (Шӑхасан районӗ) кӗрекен колхозсенчи колхозниксем тата служӑшчисем Виççӗмӗш Пилӗкçуллӑх Займа 5 400 тенкӗлӗх çырӑнчӗç.

Иванов.

Йатсӑр повесткӑсем

Ийунӗн 21-мӗшӗнче районти çтена хаçат редакторӗсен совешчанине пухас, тесӗç Тутаркас районӗнчи организацисем. Паллах, ку ӗç—чи малтан райхаçат ӗçӗ. Урӑхла ӑçтан пултӑр-ха? Райхаçатӑн районти мӗнпур çтена хаçачӗсене йертсе пымала, вӗсен редакторӗсене пӗлмелле, вӗсене вӗрентмелле вӗт... Анчах... „Ӗç йалавӗ" вара районри çтена хаçачӗсене йертсе пыма мар, вӗсен редакторӗсене те пӗлмест. Просӑв ӑшӗнче тарӑхаӑ. Йулашкинчен вӑл повесткӑсен тахçанах çырса хатӗрленӗ бланкисене çырса тултарма тытӑнчӗ. Пур графасене те тултарчӗ. „Товарищу..." тенӗ графанӑ тултарма нийепле те вӑй çитерейменӗ. Ним тӑвайман пирки тепӗр йенне „колхозу" тесе çырса хучӗ.

Çак йатсӑр повесткӑсене кашни колхозах йачӗ. Анчах камсене памала-ши вӗсене? Кала-ха, Просӑв йулташ!

Мусс.

Красноармейӗцсен çырӑвӗ

Ийулӗн 5-мӗшӗнче, каçхине, „Коминтерн" станци урлӑ епӗр чӑваш хорӗ йурланине итлерӗмӗр. Йурланисенчен „Сталин çинчен хывнӑ йурӑ" тата „Çамрӑк љотчиксем" йатлӑ йурӑсем кӑмӑла кайрӗç.

Пире чӑваш халӑхӗ хисеплӗ çынсен ретне кӑларчӗ, аслӑ совет çӗршывне сыхлама пире Хӗрлӗ Çар ретӗче пулма хастарлӑ та сывӑ ӳстерчӗ. Епӗр хамӑр халӑхӑн çитӗнӗвӗсене тата савӑнӑçӗсене йалӑнах пӗлсе тӑрас тесе „Чӑваш Коммунӗ" хаçата илсе тӑратпӑр, кашни каçах чӑваш красноармейӗцӗсем пӗрле пухӑнса вулатпӑр.

Ӗлӗк, патша саманинче, пирӗн асаттесемпе аттесем сухапуç хыççӑн тертленсе утнӑ чух, Мускава килсе унӑн урӑмӗсем тӑрӑх утасси çинчен нихӑçан та тӗлӗкре те тӗлленме пултарайман. Епӗр—кашнӑ кунсенче йалӑнах Мускавра пулатпӑр, тӗлӗнмелле çуртсем тата ытарайми метро çине пӑхса савӑнатпӑр, музейсенче пулса искусствӑпа, историпе тата ытти хаклӑ пӗлӳсемпе паллашатпӑр.

Хӗрлӗ Çара илнӗшӗн епӗр питех те хӗпӗртетпӗр, вӗреннӗсем вӗренсе пырас, çар ӗçӗн техникине алла çавӑрса илес килет.

Паттӑр хӗрарӑм-љотчиксен — Осипенко, Ломако тата Раскова йулташсен екипажне Мускавра кӗтсе илнӗ чух, епӗр хисеплӗ караулта тӑтӑмӑр. Пирӗн чӑваш халӑхӗн хӗрӗсен те авиаци ӗçне вӗренме пӗтӗм вӑйран тӑрӑшмала.

И. Олгашӗв. А. Матвейӗв.

Пурте илеççӗ

КАНАШ. Вакунсем йусакан савӑтри килхуçи хӗрарӑмсем хушшинче займ çырӑнасси саралсах пыраӑ. Займ уполномоченнӑйӗсем Çеменӑвапа Ларионӑвӑ йулташсем 22 килхуçи хӗрарӑмне пӗрле пухса займ çинчен ӑнлантарсан, килхуçи хӗрарӑмсем пухурах 700 тенкӗлӗх çырӑннӑ. Çавӑн пекех займ уполномоченнӑйӗсем Татаргинцӗвӑ йулташ 840 тенкӗлӗх, Воӑаковӑпа Н гайӗвӑ йулташсем 470 тенкӗшерлӗх займ сарнӑ.

Д. Иванов.

СУД

Çынна хӗненӗшӗн

Йамапак йалсоветӗнчи (Трак р.) Йешкилт йалӗнче пурӑнакан Куçма Çидӑрӑв, Филимон Çидӑрӑв тата Васçилий Александрӑв чылай вӑхӑт хушши хулиганла ӗçсем туса пурӑннӑ. Вӗсем кӑçалхи апрелӗн 24 мӗшӗнче ӗççе ӳсӗрӗлнӗ те Александр Сорокина, Михаил Сорокина тата Николай Порфирйӗва тытса хӗненӗ.

Çак ӗçе Трак районӗнчи халӑх сучӗ пӑхса тухса Филимон Çидӑрӑвпа Васçилий Александрӑва 5-шер çул хушши тӗрмере хупса усрамала тата пӗрер çул суйлав прависӗр хӑвармала турӗ. Куçма Çидӑрӑва 3 çул хушши тӗрмере хупса усрамала тата пӗр çул суйлав прависӗр хӑвармала турӗ.

Н. Куçмин.

Обйазательствӑсене вӑхӑтра пурнӑçа кӗртмеле

Шупашкар районӗнчи йалсоветсемпе колхозсен председателӗсен ийунӗн 16-мӗшӗнче пулса иртнӗ канашлӑвӗ çулйӗр ӗçӗ кайа йулса пынине палӑртса, Канаш—Шупашкар çулӗ çинче 12 километр тӑршшӗ хура çул тӑвассине РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсен суйлав кунӗ тӗлне тултарма сӑмах панӑ.

Суйлав иртрӗ, суйлав иртнӗренпе те нумай вӑхӑт пулчӗ. Анчах çулйӗр строительстви малтанхи пекех йулса пыраӑ. Чул 3 200 кубла метр турттарас вырӑнне 1.475 кубла метр, хӑйӑр 3 100 кубла метр вырӑнне 2.338 кубла метр çеç турттарнӑ. Нумай йалсоветсемпе колхозсем хӑйсен обйазательствисене пурнӑçа кӗртмен. Карачура йал овечӗн (председателӗ Охотников) 100 кубла метр чул турттармала. Ку тараничен пӗр лав та турттарман. Сарап-касси йалсовечӗ (председателӗ Йегоров) çул çине тудрон сарнӑ çӗрте ӗçлес плана 0,4 процент çеç тултарнӑ.

Чылай колхозсенче ку тарана çитсе те çул ӗç бригадисем организацилемен. Организациленӗ çӗрте те начар ӗçлеççӗ. Бригадӑсенче çирӗп плансем çук, бригадӑри çынсем йалӑнах улшӑнса тӑраççӗ. Бригадирсем колхозниксемпе пӗрлех çулйӗр строительствине ӗçлеме тухас вырӑнне, колхозниксене ӗçлеме йанипех лӑпланса лараççӗ. Икккасси йалсоветне кӗрекен „Майӑн 1-мӗшӗ" колхозӑн бригади бригадирсӑр ӗçлет. Паллах, вӑл бригадӑра çирӗп йӗркелӗх çук.

Çулйӗр ӗçӗнче лайӑх ӗçлекен колхозсем, бригадӑсем сахал мар. Тӗликасси йалсоветне кӗрекен „Перелом" колхоз бригади (бригадирӗ Григорйӗв йулташ) ийулӗн 7-мӗшӗ тӗлне чул хатӗрлес плана 100 процент, йӑвӑç хатӗрлес плана 114 процент тултарнӑ. Вӑл бригадӑра ӗçлекен стахановкӑ Петрова йулташ кулленхи нормӑна йалӑнах ирттерсе тултараӑ. Вӗсен опычӗсене сарсах пымала.

Йалсоветсемпе колхоз правленин председателӗсен вӑхӑта вӑраха йамасӑр çулйӗр планне тултармала тӑвас пулаӑ.

Прораб помошникӗ Слесӑрӗв.

Çулйӗр строительстви планне тултарас пулаӑ

СӖНТӖРВӐРРИ Районра çулйӗр строительстви кайа йулса пыраӑ. Çӗнӗ çулсемпе кӗперсем тӑвас тата çулйӗрсене тирпейлӗ тытса усрас тӗлӗшпе тумали ӗçсен планӗ тултарманнипех йулас хӑрушлӑх пур. Апла пулин те районти партипе совет организацисем ку ӗçе вӑйлатас тесе шухӑшламаççӗ пулмала.

Чылай колхозсенче çулйӗр бригадисем организациленӗ. Анчах вӑл бригадӑсенчен нумайӗшӗсем начар ӗçлеççӗ. Райӗçтӑвкомӗн çулйӗр пайӗ (пуçлӑхӗ Анкудинӑв) вӑл бригадӑсемпе çыхӑнса ӗçлемест, вӗсене йертсе пымасӑ. Бригадӑсем хушшинче социалисӑмлӑ ӑмӑрту пуçарман.

Çулйӗр планне тултарассине уйрӑмӑнах Чиперуйӗнчи Урицкий, Кӗçӗн Ӑстакассинчи Коминтерн йачӗпе тӑракан тата Водолейево йалсоветне кӗрекен колхозсем начар ӗçлеççӗ. Ку колхозсем çулсем çине чул тата гравий турттарас, çӗнӗрен кӗперсем тӑвас плана пурӗ те 20—30 процент çеç пурнӑçланӑ. Пуснаркассинчи „Майӑн 1-мӗшӗ" колхозра (председателӗ К. Востров) пайанхи куна çитсе те çулйӗр строительствинче ӗçлеме уйрӑм бригадӑ организацилемен.

Çулйӗр строительствинче малта пыракан колхозсем сахал мар. Акӑ, Ирӗх Çырми колхозӗнчи çулйӗр бригади (бригадирӗ Петровӑ) çулсене аван пӑхса тӑраӑ. Бригадӑ çӗнӗрен 5 кӗпер тунӑ. Макаç йалсоветне кӗрекен колхозсем те лайӑх ӗçлеççӗ. Макаçри „Октябрь" колхоз çулсем çине 615 кубла метр хӑйӑр турттарчӗ. Шуршӑлти Бљухӗр йачӗпе тӑракан, Турханкассинчи „Тӗрӗс çул", Пысӑк Маклашкинӑри „Осоавиахим" колхозсем те çулйӗрсене лайӑх пӑхса тӑраççӗ.

Çулйӗрсене тирпейлӗ тата куљтурӑлӑ тытса тӑрассишӗн йалсоветсемпе колхозсен председателӗсем тата çулйӗр пайӗ ответлӑ. Çакна йалӑнах асра тытас пулаӑ. Çулйӗр строительстви планне тултарассишӗн бригадӑсем хушшинче социалисӑмлӑ ӑмӑртӑва чӑнах пуçармалӑ тӑвас пулаӑ.

Ир. Данилӑв.

Ответлӑ редактӑр Н. М. СЕМЕНАВ.

Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Çулйӗрпе автотранспӑрт тытӑмӗ

çанна пӗлтерет:

ийулӗн 19-мӗшӗнчен пуçласа Шупашкартан Вӑрнара кайакан автоçула

10 километр таран хупӑннӑ

шутлаваӑ. 10 километртан малалла сӗреме Вӑрнар çулӗ çине тухма Мӑн Сӗнтӗре кайакан çулпа каймала.

Шупашкартан Вӑрнара çапла каймала пулаӑ: Шупашкар — Мӑн Сӗнтӗр çулӗ е 13 километр таран, унтан Вӑрнар çулӗ çине 11-мӗш километр тӗлне çавӑрӑнса тухмала. Хӑш тӗлте çавӑрӑнса тухмаллине палӑсемпе кӑтартнӑ.

Çулйӗрпе автотранспӑрт тытӑмӗ.

Уполномоченнӑй Чувашглавлита № 372

Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста, заказ № 581.